ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Март
11
Ытларикун
№ 51 (8703)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ. Союз Совечĕ тата Национальноçсен Совечĕ мартăн 8-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсем çинчен Информациллĕ Пĕлтерӳ (1 стр.).
НАЦИОНАЛЬНОÇСЕН СОВЕТĔНЧЕ. Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ И. С. Хохлов депутат ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă содоклад. СССР Финанс министрĕ А. Г. Зверев юлашкинчен тухса калани (2—3 стр.).
СОЮЗ СОВЕТĔНЧЕ. Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ Л. Р. Корниец депутат ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă содоклад. СССР Финанс министрĕ А. Г. Зверев юлашкинчен тухса калани (3—4 стр.).
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ. Чăваш АССР Верховнăй Советне пухасси çинчен (1 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Хамăр республика тăрăх (4 стр.).

СССР халăхĕсен туслăхĕ ӳссĕн палăрни

Совет сыннисем СССР Верховнăй Совечĕ çирĕплетнĕ пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн çĕнĕ бюджетне пысăк кăмăлпа йышăнса илеççĕ. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ партипе правительство халăх хуçалăхне, ĕçсыннисен пурнăçĕпе культурине малалла ӳстерес тĕлĕшпе палăртнă пысăк ĕçсене пурнăçлама укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăма май парать.

Çĕнĕ бюджета тупăшсем енĕпе 509,9 миллиард тенкĕлĕх, расходсем енĕпе 476,9 миллиард тенкĕлĕх йышăннă. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан бюджетăн тупăшĕ 41,9 миллиард тенкĕлĕх, расходсем 35,6 миллиард тенкĕлĕх ӳсеççĕ.

Бюджет чылай ӳсни нумай нациллĕ Совет государствин экономикăллă хăвачĕ малалла тĕреклелсе пыни çинчен, унăн производительнăй вăйĕсем пысăк хăвăртлăхпа аталанни çинчен, хуçалăхăн социализмлă системи капитализмлă системăран малта тăни çинчен калать. Бюджет цифрĕсем пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешме хатĕр тăнине кăтартаççĕ.

Совет Союзне 60 ытла нацисемпе нациллĕ ушкăнсем тата халăхсем кĕреççĕ. Вĕсене кашнин валли пирĕн çĕршывра аталанма, материальнăй тата духовнăй ырлăх çителĕклĕ тума майсем уçса панă. Мирлĕ ĕçре, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешӳре аталаннă тата тĕрекленнĕ Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи тăванла туслăх. Социализмлă нацисем пĕр-пĕрне пулăшни хуçалăхпа обществăлла пурнăçăн мĕнпур облаçĕсенче палăрать, чаплă çимĕç кӳрет. СССР халăхĕсен пысăк ирĕклĕхĕн пĕрлĕхĕ, вĕсен материальнăй тата духовнăй пирĕн Тăван çĕршыв хăвачĕн пысăк никĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать. Шăпах та çак йĕркĕне пула ĕнтĕ Совет государстви кирек мĕнле задачăна та татса пама пултарать.

«...СССР халăхĕсен хушшинчи туслăх...—тесе ĕнерет Сталин юлташ,— ...Мĕнпур тесен çак туслăх пулнă чухне пирĕн çĕршыври халăхсем ирĕклĕ те ... пулассĕ».

Большевиксен партийĕ социализмлă нацисене чечеклентересшĕн, вĕсен тăванла туслăхĕ пĕр-пĕрне пулăшассине аталантарассишĕн куллен тăрăшать. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ ленинла-сталинла наци политикин çĕнтерĕвне тепĕр хут кăтартса парать, вăл мĕнпур социализмлă нацисен экономикипе культурине малалла çĕкленме пулăшать.

СССР Верховнăй Совет депутачĕсем иккĕмĕш сессире тухса каласа, пурте пĕр сын пек: çĕнĕ бюджет пирĕн çĕршывра пурăнакан мĕнпур халăхсен интересĕсене тивĕçтерет, тесе пĕлтерчĕç. Вĕсем мăнкăмăллăн союзлă тата автономиллĕ республикăсен, крайсемпе облаçсен хуçалăхпа культура строительствинче тунă çитĕнӳсем çинчен каласа пачĕç.

СССР Государство бюджечĕнче висĕ пайран икĕ пайне яхăн халăх хуçалăхне тата социально-культурлă ĕçсене уйăрнине пурса тăма тухать. Бюджетран халăх хуçалăхне паракан укçаран çурри ытла капитальнăй строительство ĕçне каять. Çак ĕçре уйрăмах Сталин юлташ пуçарнипе пуçланакан коммунизмăн аслă стройкисем уйрăм вырăн йышăнса тăраççĕ. Пысăк гидротехникăлла сооруженисем, çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, нефть промыслисем, çурт-йĕр тата культурăна пăхакан учрежденисем тунипе мĕнпур советлă республикăсен экономикипе культурине малалла ытларах чечеклентерме май параççĕ.

СССР Государство бюджечĕнче союзлă советлă социализмлă республикăсен бюджечĕсем палла вырăн йышăнса тăраççĕ. Союзлă республикăсен 1952 çулхи бюджечĕсем пысăк пулассĕ—98,7 миллиард тенке çитессĕ. Çак укçа-тенкерен 90 процентне яхăн халăх хуçалăхне культурине аталантарма каять. Союзлă республикăсен бюджечĕсенчен уйăрса паракан укçа-тенке 1952 çул валли тăрăх республикăсен тата вырăнти промышленность производствине ӳстерме пулăш задачине пурнăçлама, çавăн пекех тата строительствăна социально-культурлă ĕçсен пысăк программине пурнăçлама май парать.

СССР Верховнăй Совет депутачĕсем—пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсен посланецĕсем—сессире тухса каланă хăйсен сăмахĕсенче социализмлă нацисене чечеклентерме куллен тăрăшнăшăн Ленин—Сталин партине чĕререн юратса тав тăваççĕ.

Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче, халăхсен тăванла çемйинче мĕнпур советлă республикăсен ĕçри çĕнтерĕвĕсем ӳсеççĕ, нумайланса пыраççĕ. Юлашки вăхăтра Россия Федерацийĕпе Украина республикинчи ĕçсыннисем хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Белоруссире промышленность продукцийĕ кăларасси вăрçă хыççăнхи çулсенче улттă хут ытла, машиностроени ĕçĕ вара сакăр хут ытла ӳснĕ. Кавказ леш енчи советлă республикăсен экономикипе культури ӳсет. Азербайджан нефтяникĕсем иртнĕ çул нефть кăлармалли государство планне иртерсе тултарчĕç. Грузи ССР-ĕнче йывăр промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсем кăларакан продукци шайĕ çултан-çул ӳсе пырать. Армян республики промышленноçĕ пысăк хăвăртлăхсемпе ӳсет.

Вăтам Азири, Балти тăрăхĕнчи, Молдавири, Карело-Финн республикинчи халăхсем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Казах ССР-ĕнче промышленность производстви çултан-çул ӳсекен хăвăртлăхпа вăйланать. Кунта çĕнĕрен те çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, рудниксем ĕçе кĕреççĕ. Узбекистанра, Таджикистанра, Киргизире, Туркменире промышленноçĕ пите нумай ӳсрĕ, ялхуçалăх çĕвĕлнĕ çулĕпе малалла пырать. Вăтам Азири советлă республикăсен Хĕвелтухăçĕнче социализм маякĕ пулса тăраççĕ.

Литва, Латви тата Эстони республикисем мĕнпур совет халăхĕсем тăванла пулăшнипе кĕске срокра вăрçă гитлерла оккупаци кӳнĕ суранĕсене сиплесе çитерчĕç, промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене туса хучĕç, аталаннă индустриллĕ-колхозла республикăсем пулса тăчĕç, вăрçăччен производство шайĕнчен чылай иртсе кайрĕç.

Пирĕн çĕршыври халăхсен суйланă сыннисем — Верховнăй Совет депутачĕсем сессире хăйсен сăмахĕсенче социализмлă нацисен çĕнтерӳĕсем вăйĕсен çинчен Тăван çĕршывшăн мăнăçланса пысăк туйăмпа калаççĕ.

— Хăйсем тунă мĕнпур çитĕнӳсене, — тенĕ сессире депутат С. Бабаев,—туркмен халăхĕ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ, Совет правительстви тата Сталин юлташ куллен тăрăшнипе пулăшнипе тунă. Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕн аслă вăйне пула, вĕсем тăванла пулăшнипе, чи малтан аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе тунă.

Капитализмлă çĕршывсенче çĕнĕ вăрçа хатĕрлекен вăхăтра, çĕршывсен массисене эксплуатацилесси тата вĕсем чухăнлăхĕ ӳсекен вăхăтра, национализмпа космополитизм идеологине сарнă вăхăтра, пĕр нацисене тепĕр нацисем пусмăрласа тата сараса пурăннă вăхăтра, пирĕн çĕршывра мирлĕ строительство анлăн та аталанса саралать, халăхсен туслăхĕ идеологийĕ пурнăçа кĕрсе пырать, Совет Союзĕнчи халăхсен тăванла туслăхĕ пĕр-пĕрне пулăшасси тĕреклент, ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланать.

Мирлĕ ĕçре кĕрешекен пĕтĕм социализмлă нацисем коммунизм строительствине хăйсен вăйне хураççĕ. Чĕрĕ пурнăç парса тăракан совет патриотизмĕ, халăхсен никам çĕмĕрейми сталинла туслăхĕ государство плансене тултарасси тата иртерсе тултарассишĕн пĕтĕм халăх хушшинче сарăлнă социализмлă ăмăртура чаплăн курăнса тăрать.

СССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен интересĕсене палăртса тăрать. Кулăш — мирлĕ строительство бюджечĕ, экономикăпа культурăна малалла вăйлатмалли, ĕçсыннисен пурнăçне вĕсĕмĕр лайăхлатмалли бюджет.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе хавхаланнă совет сыннисем паттăррăн ĕçленипе аслă Совет Союзĕн—пирĕн çĕршыван халăхсен туслăхĕпе мухтавлă тĕрекĕ, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçĕн тĕрекĕ пулса тăракан çĕршывăн хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетĕççĕ.

(«ПРАВДА» хаçатăн мартăн 10-мĕшĕнчи умстатьи).

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ çапла йышăнать: Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин иккĕмĕш сессине 1952 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ Д. МИТЬКОВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1952 çулхи мартăн 10-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем

Союз Совечĕн 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 8-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк дворецра Союз Совечĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ—Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат.

Союз Совечĕн ларăвĕнче ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малалла пынă.

Çак депутатсем тухса каланă: **М. Ю. Шумаускас** депутат (Литва ССР-ĕнчи Алитус округĕ), **С. Бабаев** депутат (Туркмен ССР-ĕнчи Ташауз округĕ), **А. Суеркулов** депутат (Киргиз ССР-ĕнчи Тянь-Шань округĕ), **А. Б. Аристов** депутат (Красноярск крайĕнчи Минусинск округĕ), **А. Алимов** депутат (Узбек ССР-ĕнчи Самарканд ял округĕ), **П. А. Кокзяев** депутат (Мордва АССР-ĕнчи Красная Слобода округĕ), **В. Г. Жаворонков**, юлташ (СССР Суту-илӳ министрĕ), **А. Н. Егоров** депутат (Брянск облаçĕнчи Брянск округĕ).

Кун хыççăн Союз Совечĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисене чарса лартма решени йышăннă, унтан СССР Финанс министрĕн **А. Г. Зверев** юлташăн юлашки сăмахне итленĕ.

Л. Р. Корниец депутат сĕннипе Союз Совечĕ бюджета çирĕплетме çакăн пек йĕрке тунă: ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне тупăшсемпе расходсен уйрăм пайĕсем тăрăх, союзлă бюджета—тупăшсемпе расходсен пĕтĕм итогĕсем тăрăх, ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан Закон проектне—статьясем тăрăх уйрăммăн сасăласа йышăнмалла.

Союз Совечĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланни çинчен сырнă отчета пĕр сасăпа пулса çирĕплетнĕ. «ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан Закона» малтан статьясем тăрăх, унтан пĕтĕмĕшпе çирĕплетнĕ.

Çакăн хыççăн Союз Совечĕ кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва—СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетес ыйтăва пăхса тухнă.

Ку ыйтупа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. Ф. Горкин** депутат доклад тунă.

Союз Совечĕ, пĕр сасăпа пулса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çак Указĕсене çирĕплетесси çинчен Закон йышăннă: «Таджик ССР-ĕнчи Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен», «Грузи ССР-ĕнче Тбилиссипе Кутаис облаçĕсем туса хурасси çинчен», «СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен», «Государствăн апат-çимĕçпе материальнăй резервĕсен министерствине пĕтересси çинчен», «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хурасси çинчен».

Çак Закона йышăнни пирки СССР Конституцийĕн 25, 27, 70 тата 77-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса сырнисем кĕртнĕ.

Çакăн хыççăн Союз Совечĕ, пĕр сасăпа пулса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн ĕçе уйăрса лартасси çинчен кăларнă çак Указĕсене çирĕплетнĕ:

СССР Электропромышленность министрĕ пулма—Димитрий Васильевич **Ефремова**;

СССР Апат-çимĕç промышленноçĕн министрĕ пулма—Иван Кузьмич **Сиволапа**;

СССР Тинĕс-Çар министрĕ пулма—Николай Герасимович **Кузнецова**;

ССР Союзĕн Тулашри суту-илӳ министрĕ пулма—Павел Николаевич **Кумыкина**;

СССР Ялхуçалăх машиностроении министрĕ пулма—Сергей Александрович **Степанова**;

СССР Министрĕсен Совечĕ сумĕнчи искусствăсен ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма—Николай Николаевич **Беспалова**;

СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председателĕ пулма—Димитрий Васильевич **Павлова**.

Малалла Союз Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ «Ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетнĕ.

Çакăнпа Союз Совечĕн ларăвĕ хупăннă.

Национальноçсен Совечĕн 1952 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Мартăн 8-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк дворецра Национальноçсен Совечĕн виççĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Лару председателĕ — Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат.

Национальноçсен Совечĕн ларăвĕнче ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисем малалла пынă.

Çак депутатсем тухса каланă: **В. Г. Цховребашвили** депутат (Грузи ССР-ĕнчи Хашури округĕ), **И. А. Бенедиктов** юлташ (СССР Ялхуçалăх министрĕ), **Н. Додхудоев** депутат (Горно-Бадахшан автономиллĕ облаçĕнчи Мургаб округĕ), **М. М. Алиев** депутат (Азербайджан ССР-ĕнчи Лачин округĕ), **В. В. Кузнецов** депутат (РСФСР-ти Сталинград округĕ), **Ф. З. Загафуранов** депутат (Пушкăрт АССР-ĕнчи Белорецк округĕ), **С. М. Тихомиров** юлташ (СССР Хими промышленноçĕн министрĕ), **В. А. Протодьяконов** депутат (Якут АССР-ĕнчи Булунски округ).

Кун хыççăн Национальноçсен Совечĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх пренисене чарса лартма решени йышăннă, унтан СССР Финанс министрĕн **А. Г. Зверев** юлташăн юлашки сăмахне итленĕ.

И. С. Хохлов депутат сĕннипе Национальноçсен Совечĕ бюджета çирĕплетме çакăн пек йĕрке тунă: ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне тупăшсемпе расходсен уйрăм пайĕсем тăрăх, союзлă бюджета—тупăшсемпе расходсен пĕтĕм итогĕсем тăрăх, ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан Закон проектне—статьясем тăрăх уйрăммăн сасăласа йышăнмалла.

Национальноçсен Совечĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджечĕ мĕнле пурнăçланни çинчен сырнă отчета пĕр сасăпа пулса çирĕплетнĕ. «ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан Закона» малтан статьясем тăрăх, унтан пĕтĕмĕшпе çирĕплетнĕ.

Çакăн хыççăн Национальноçсен Совечĕ кун йĕркинчи тепĕр ыйтăва—СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетес ыйтăва пăхса тухнă.

Ку ыйтупа СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. Ф. Горкин** депутат доклад тунă.

Национальноçсен Совечĕ, пĕр сасăпа пулса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн çак Указĕсене çирĕплетесси çинчен Закон йышăннă: «Таджик ССР-ĕнчи Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен», «Грузи ССР-ĕнче Тбилиссипе Кутаис облаçĕсем туса хурасси çинчен», «СССР Хула строительствин министерствине пĕтересси çинчен», «Государствăн апат-çимĕçпе материальнăй резервĕсен министерствине пĕтересси çинчен», «СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хурасси çинчен».

Çак Закона йышăнни пирки СССР Конституцийĕн 25, 27, 70 тата 77-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса сырнисем кĕртнĕ.

Ун хыççăн Национальноçсен Совечĕ, пĕр сасăпа пулса, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн ĕçе уйăрса лартасси çинчен кăларнă çак Указĕсене çирĕплетнĕ:

СССР Электропромышленность министрĕ пулма—Димитрий Васильевич **Ефремова**;

СССР Апат-çимĕç промышленноçĕн министрĕ пулма—Иван Кузьмич **Сиволапа**;

СССР Тинĕс-çар министрĕ пулма—Николай Герасимович **Кузнецова**;

ССР Союзĕн Тулашри суту-илӳ министрĕ пулма—Павел Николаевич **Кумыкина**;

СССР Ялхуçалăх машиностроении министрĕ пулма—Сергей Александрович **Степанова**;

СССР Министрĕсен Совечĕ сумĕнчи искусствăсен ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма—Николай Николаевич **Беспалова**;

СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленность таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитечĕн председателĕ пулма—Димитрий Васильевич **Павлова**.

Малалла Национальноçсен Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ «Ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетнĕ.

Çакăнпа Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ хупăннă.

СОЮЗ СОВЕТĔНЧЕ

Мартăн 8-мĕшĕнче Кремльти Пысăк дворецра СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ хăйĕн ĕçĕсене малалла туса пынă.

Союз Совечĕн ларăвĕ 11 сехетре уçăлнă. Председатель сĕтелĕ хушшинче—Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат, председателĕн заместителĕсем **А. И. Кириченко, Т. М. Зуева, А. И. Ниязов** депутатсем.

В. М. Молотов, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, Н. С. Хрущев, Н. М. Шверник, М. А. Суслов, П. К. Пономаренко юлташсем правительство ложисене тухсан, вĕсене депутатсем тата хăнасем нумайччен тăвăллăн аллă çупса саламлаççĕ.

Союз Совечĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне малалла сӳтсе явать.

М. Ю. Шумаускас депутат (Литва ССР-ĕ) сăмах илет. Вăл Литвари ĕçсыннисем, Совет Союзĕн правительстви пысăк пулăшу панипе, хăйсен халăх хуçалăхне, фашистсем оккупациĕ вăхăтĕнче арканса юнăскере, пĕтĕмпех юсаса çитерни çинчен калать. Промышленность производстви, вăрçă умĕнхи çулсенчипе танлаштарсан, 87 процент ӳснĕ. Хресченсем пысăк пайĕ колхозсене кĕнĕ. Шумаускас юлташ Шяуляй хулин пурнăçĕнче мĕнле улшăнусем пулса иртни çинчен тĕплĕ каласа парать, экономикăпа культура малалла аталанса пыни çинчен калакан тĕслĕхсем илсе кăтартать. Шяуляй облаçĕнчи шкулсенче халь вăхăтра пĕтĕм буржуалла Литвара мĕн чухлĕ ача вĕреннĕ, çавăн чухнехинчен икĕ хут нумайрах ача вĕренет.

Шумаускас депутат союзлă министерствăсене — электропромышленность, автомобильпе трактор промышленноçĕ, станоксем тăвакан промышленность министерствисене вĕсем хăйсене пăхăнса тăракан предприятисене тăвас ĕçе вăраха ярса пынăшăн критикăлать.

Юлашкинчен вăл ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне çирĕплетме сĕнет.

С. Бабаев депутат Туркмен халăхĕн çитĕнĕвĕсем çинчен каласа парать. Советлă Туркменире нефть промышленноçĕ хăвăрт аталанса пырать. Уй-хирте ĕçлекен сынсем, И. В. Сталин юлташ çĕр мамăкĕ пирĕн çĕршывăн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен каланине асра тытса, çултан-çул çĕр мамăкĕ ытларах та ытларах туса илеççĕ. Иртнĕ çулта вĕсем пысăк тухăçлă çĕр мамăкĕ ӳстернĕ, государство çĕр мамăкĕ хатĕрлес тĕлĕшпе панă плана иртерсе тултарнă. Иртнĕ çулта колхозсен тупăшĕсем 1 миллиард та 300 миллион тенкĕрен иртнĕ.

Туркмен халăхĕ ĕмĕртенпех пушхире шыв илсе пырасси, Кара-Кумри сутсантаăка урăхлатса çĕнетесси çинчен ĕмĕтленсе пурăннă, халĕ çав ĕмĕт пурнăçланма тытăннă. Халĕ пĕтĕм çĕршыв тĕнчери чи пысăк канала—Туркменири тĕп канала тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Сталинла аслă стройка çĕнĕрен 1.300 пин гектар çĕре çĕр мамăкĕ çитĕнтерме юрăхлă тăвать. Çав канала тунă çĕрте кăçал строительство ĕçĕсен хисепĕ ултă хут ытла ӳсет.

Туркмен халăхĕ наукăпа культурăна аталантарас ĕçре тунă чи пысăк çитĕнӳ вăл—Туркмен ССР Наука академине тата Государство университетне уçни пулать.

А. Суеркулов депутат Советлă Киргизин халăх хуçалăхĕпе культури çĕнĕрен хăватлăн çĕклĕнсе пыни çинчен калать. Республика промышленноçĕ иртнĕ çулта хăйĕн планне иртерсе тултарнă. Тырпул акмалли, уйрăмах çĕр мамăкĕ, кенаф, кăнтăрти кантăр акса тумалли çĕр лаптăкĕ ӳссе пырать. Çĕнĕ йышши пахă культурăсем—кендырьпе джут акса тума вĕренеççĕ. Киргиз республики тырпул хăйне валли çителĕклĕ туса хатĕрлет çеç мар, вăл хăйĕн тыррине урăх çĕре те ярать. Çĕр мамăкĕн, сахăр кăшманĕн, йĕтĕн-кантăрăн тухăçлăхĕ нумай ӳснĕ. Колхоз фермисенче выльăхсен йышĕ 1940 çулхинчен темиçе хут нумайрах.

Суеркулов депутат республикăра халăх хуçалăхĕнчи шалти резервсемпе туллин усă курманнине палăртать. Вăл геологи министерстви правительство Хĕвелтухăçĕнчи Ферганăри çĕр кăмрăк бассейнне хатĕрлесе ĕçе ярас пирки йышăннă постановлени çителĕксĕр пурнăçласа пыни, СССР Ялхуçалăх министерстви республикăна выльăх-чĕрлĕх фермисенчи ĕçсемпе выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсене механизацилеме сахал пулăшни çинчен калать.

А. Б. Аристов депутат Челябинск облаçĕнче промышленность мĕнле аталанса пынине уççăн палăртса тăракан сведенисене илсе кăтартать. Вăл Магнитогорскри, Челябинскри, Златоустри тата ытти çĕртри металлурги завочĕсем халĕ металл нумай туса хатĕрлени, вĕсем ĕлĕк патша Российинчи мĕнпур предприятисем шăратса кăларнинчен те чылай нумайрах металл шăратса кăларни çинчен калать. 1951 çулта облаçри предприятисем çĕршыв валли металл нумай туса хатĕрленĕ, çĕршер автомобильсем, бульдозерсем, скреперсем, тракторсем, самоходнăй комбайнсем туса кăларнă. Колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ.

Аристов депутат облаçри хăшпĕр предприятисен руководителĕсем плансене пĕтĕмĕшле тултарнипе лăпланса ларнине, час-часах программăна вăй сахалтарах хумалли япаласене туса хатĕрленĕ шутпа тултарнине, чĕртаварпа материалсене перскетлессишĕн начар кĕрешнине палăртать.

— Узбек республикинчи халăх çĕршыва çĕр мамăкĕ çителĕклĕ парса тăрассишĕн хăй ответлă пулса тăнине ăнланса илнĕ,—тенĕ **А. Алимов** депутат.—Республикăри ĕçсыннисем, Сталин юлташ патне сыру ярса, кăçал пĕлтĕрхинчен 400 пин тонна ытларах çĕр мамăкĕ хатĕрлесе государствăна пама обязательство илчĕç пулсан, халĕ вĕсем çав сăмаха пурнăçлас тĕлĕшпе пур ĕçсене те туса пыраççĕ. Алимов юлташ Сурхан-Дарьяпа Фергана облаçĕсенчи çĕнĕ çĕрсене тырă тата çĕр мамăкĕ акса тума хатĕрлесе çитерессипе çыхăнса тăракан чылай ыйтусене çĕклет, Электростанцисен министерствине Узбек ССР-ĕнче электростанцисем лартмалли плана çителĕксĕр пурнăçласа пынăшăн критикăлать.

Алимов депутат государство бюджетне, унта Бюджет комиссийĕ кĕртме сĕннĕ тӳрлетӳсемпе пĕрле, çирĕплетме сĕнет.

— Мордва АССР-ĕ кĕске вăхăт хушшинчех патша Российинчи кая юлнă районтан кучухнехи техникăпа пуянлатнă промышленность предприятисемлĕ, малта пыракан ялхуçалăхлă республика пулса тăчĕ,—тет **П. А. Кокзяев** депутат. — Мордва халăхĕн халĕ хăйĕн литератури пур, совет интеллигенцийĕн нациллĕ кадрĕсем ӳсе çитĕнчĕç.

— Капитализмлă ниме́нле çĕршывра та вак халăхсем пирĕн çĕршыври пек, Совет Союзĕнчи пек, ирĕклĕн тата хăвăрт аталанса пыма пултараймассĕ,—тет Кокарев юлташ.—Мордва халăхĕ Совет Союзĕнчи халăхсен çирĕп туслăхĕн организаторне, хамăрăн генилле çулпуçăмăрпа учителĕмĕре Сталин юлташа чунтан-чĕререн юратса тав тăвать. (Нумайччен аллă çупаççĕ).

Юлашкинчен Кокарев депутат СССР Ялхуçалăх министерствине вăл республикăна пусă çаврăнăшĕсене йĕркелеме тата техника культурисене акса пăхса ӳстерне сĕрти йывăр ĕçсене механизацилеме çителĕксĕр пулăшнăшăн критикăлать. Вăл çул-йĕр министерствипе станкостроени министерстви ĕçĕсенчи чылай çитменлĕхсем çинчен те калать.

СССР Суту-илӳ министрĕ **В. Г. Жаворонков** сăмах илет.

— Пĕтĕм халăх хуçалăхĕ ӳссе пынă май тавар çаврăнăшĕ те вăйланса пырать,—тет вăл.—1951 çулта государствăпа кооперации магазинĕсемпе ларекĕсем халăха 1950 çулхинчен 15 процент ытларах тавар сутнă.

Уйрăмах аш-какай, колбаса йышши çимĕçсем, сĕт-çу, сĕт-çу продукчĕсем, çăмарта, сахăр, улма-çырла, çĕр мамăк пирĕпе пурçăн пир-авăр, сĕтел-пукан, строительство материалĕсем, радиоприемниксем, çĕвĕ машинисем, велосипедсем нумай сутнă, çавсене сутас ĕç вăйланнă. Халăх хуçалăхĕн 1952 çулхи планĕнче государствăпа кооперации суту-илĕвĕн тавар çаврăнăшне малалла ӳстерсе пыма, халăха апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем нумайрах сутма палăртнă.

Жаворонков юлташ СССР Суту-илӳ министерствипе суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче чарăнса тăрать, суту-илӳ министерствипе Советсен вырăнти органĕсен тавар çаврăнăшне вăйлатас тата культурăллă суту-илӳ организацилес ĕç çине тимлĕ пăхма кирлине палăртать.

А. Н. Егоров депутат Карело-Финн республикинчи халăх хуçалăхĕн тĕп отраслĕ пулса тăракан вăрман промышленноçĕ çинчен калать. Вăрман касса хатĕрлес ĕçе çĕнĕ техникăпа ытларах та ытларах пуянлатни, алăпах вăрман каснă çĕрте ĕçлеме пынă кахрсен йышĕ хутшăнса пыни, йывăç касакансене

(Малалли 2-мĕш страницăра).

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Союз Советĕнче

(Малалли. Пуçламăшĕ 1 стр.)

ĕç тухăçлăхне ÿстерме условисем туса пани, çав условисене лайăхлатса пыни çинчен калать. Карело-Финн республикинчи вăрмансенче 1949 çулхичен касна йывăççене çул хĕрне механизмсемпе усă курса илсе тухни пулман. Халĕхи вăхăтра вара йывăççене çул хĕрне илсе тухас ĕçĕн 60 процентне ытла механизациленĕ. 1951 çулта йывăç турттарса тухасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 16 процента ытла ÿснĕ.

— Республикăри вăрман промышленноçне хăвăрт ÿстерес пыма майсем пур, анчах вăл майсемпе туллин усă курмаççĕ. Вăрман промышленноçĕн кая юлса пынине халĕ те пĕтермен,—тет Егоров депутат.—Ĕçсем çавăн пек юлса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл—СССР Вăрман промышленноçĕ министерстви вăрман касса хатĕрес ĕçе питĕ çителĕксĕр ертсе пыни пулать. Совет Союзĕн Вăрман промышленноçĕ министерстви, çавăнпа, вăрман турттармалли çулсем тăвас ыйтăва халиччен те татса памасть.

Унтан Егоров депутат государство бюджетне çирĕплетме кирли пирки калать.

Бюджет çинчен тунă доклад тăрăх прениесене чарса лартасси çинчен решени йышăнаççĕ.

СССР Финанс министрĕ А. Г. Зверев юлашкинчен тухса калать.

Зверев юлташ Совет государствин бюджечĕ халăх хуçалăхне малалла хăватлăн аталантарма, Совет çĕршывĕнчи халăхсен пурнăçне лайăхлатма тата культурине ÿстерме кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ парса тăма май панине палăртать.

Зверев юлташ Правительство, Бюджет комиссийĕн сĕнĕвĕсене килĕшсе, бюджетри тупăшсен хисепне 1 миллиард та 92 миллион та 200 пин тенкĕ чухлĕ ÿстерме, çак укçа-тенке тупăшсемпе расходсем хушшинчи тупăшсен хисепне кĕртме йышăнни çинчен пĕлтерет.

— Государствăн 1952 çулхи бюджечĕ,—тет Зверев юлташ,—совет халăхĕ хăйĕн вăй-хăвачĕ çирĕп шанса тăнине, совет халăхĕ, большевиксен партийĕ, Совет правительстви, пирĕн юратнă çулпуçăмăр учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пынипе, хамăр çĕршывра коммунизм обществи тăвас ĕçре çĕнĕ те çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕрешнине кăтартса парать. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Союз Советĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ Л. Р. Корниец депутат юлашки сăмах илмест, Союз Совечĕ вара государство бюджетне йышăнас пирки сасăлама тытăнать.

1952 çулхи бюджета, унăн тупăшĕ 509.911.608 пин тенкĕ, расходсем—476.920.588 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 32.991.020 пин тенкĕ ытларах пулмалла туса çирĕплетеççĕ. ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен çырнă отчета çирĕплетеççĕ.

Çакăн хыççăн Совет Союзĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ çинчен калакан Закона пĕр саслă пулса йышăнать.

Кун йĕркинчи тепĕр ыйту—СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетесси çинчен доклад тума СССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарьне А. Ф. Горкин депутата сăмах параççĕ.

Союз Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Таджик ССР-ĕнчи Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен, Грузи ССР-ĕнче Тбилиси тата Кутаиси облаçĕсем туса хурасси çинчен, СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен, Апат-çимĕçпе материальнăй резервсен министерствине пĕтересси çинчен, СССР Министрĕсен Совечĕ Апат-çимĕçсемпе промышленноç таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государственнăй Комитетне туса хурасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетет. Çавăн пекех министрсем пулма çаксене: СССР Электропромышленность министрĕ пулма Д. В. Ефремова, СССР Апат-çимĕç промышленноçĕ министрĕ пулма И. К. Сиволапа, СССР Тинĕс-Çар министрĕ пулма Н. Г. Кузнецова, СССР Тулашри суту-илÿ министрĕ пулма П. Н. Кумыкина, СССР Ялхуçалăх машиностроени министрĕ пулма С. А. Степанова, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма Н. Н. Беспалова, СССР Министрĕсен Совечĕн Апат-çимĕçсемпе промышленноç таварĕсем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен Государство Комитечĕн председателĕ пулма Д. В. Павлова уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетет. «Ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен» кăларнă Указа çирĕплетет.

Союз Совечĕ СССР Конституцийĕн 25, 27, 70 тата 77-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушса çырнисем кĕртме решени йышăнать.

Çакăнпа Союз Совечĕн ларăвĕ хупăнать. (ТАСС).

Национальноçсен Советĕнче

Касхине 6 сехетре Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ уçăлнă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче—Национальноçсен Совечĕн председателĕ депутат Ж. Шахметов, председатель заместителĕсем М. Т. Якубов, В. Т. Лацис, Т. М. Матиашвили депутатсем.

А. И. Микоян, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, Н. М. Шверник, М. Ф. Шкирятов правительство ложисене тухнипе депутатсемпе хăнасем алă çупса кĕтсе илеççĕ.

В. Г. Цховребашвили депутат (Грузи ССР) сăмах илет. Вăл республикăра çĕр кăмрăк промышленноçĕ аталанни çинчен, электроэнерги кăларасси ÿсни çинчен, тимĕр касмалли станоксем, цемент туса кăларас ĕç вăйланни çинчен калать. Иртнĕ çулта 1940 çулхинчен икĕ хут ытларах тырă туса илнĕ, сортлă чей çулçисем тăвасси 2,6 хут ÿснĕ, колхозсем виноград, табак, çĕпĕтан çăвĕсен культурисем чылай пуçха кĕртеççĕ.

Юлашкинчен Цховребашвили: грузин халăхĕ коммунистсен партийĕн тавра, тата Сталин тавра тачăн пĕтĕçсе тăрса пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле 1952 çулхи халăх хуçалăх планне тултарассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлĕ, коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тăвĕ,—тесе калать.

СССР Ялхуçалăх министрĕ И. А. Бенедиктов колхоз производствинче пулса иртнĕ пахалăхлă пысăк улшăнусем çинчен калать.

Бенедиктов юлташ автомобиль тата трактор промышленноçĕ министерствине ялхуçалăх машинисем тăвакан министерствăна критиклать, вĕсен уйрăм предприятийĕсем машинăсене запаслă пайсене начар туса кăлараççĕ. Çавăн пекех вăл хими промышленноçĕ министерствине вĕтетнĕ удобренисене малалла туса кăларас ĕçе вăраххăн хăнăхса пынăшăн критиклать.

Юлашкинчен Бенедиктов юлташ сурăхсене хатĕрленĕ иртерсе кăларасси çинче чарăнса тăрать.

— Государство бюджечĕ,—тет Н. Додхудоев депутат (Таджик ССР),—ленинла-сталинла наци политики ярăсçăн палăрса тăрать, вăл политика халăхсем хушшинчи туслăха тăтăш ÿстерсе пыма, мĕнпур тăванла нацисен хуçалăхĕпе культурине малалла хăпартма май парать. Иртнĕ çул Таджик ССР-ĕ çĕнĕ çитĕнÿсем турĕ. Промышленноçĕ производство планне иртерсе тултарнă. Колхозсем государствăна 1950 çулхинчен 50 пин тонна ытларах çĕр мамăкĕ панă. Ĕççынисен пурнăçĕ лайăхланнă.

Депутат союзлă министерствисен ĕçне критиклать. Çĕр мамăк министерстви çĕре çĕнĕ йĕркепе шăварамалли машинăсемпе республикăри колхозсене кирлĕ таран парса тăмасть, ялхуçалăх министерстви колхозсенче гидроэлектростанцисем тăвас ĕçе çителĕксĕр пулăшать.

Р. А. Алиев депутат Азербайджанра нефть промышленноçĕ вăйланса пыни çинчен калать. Республика 1951 çулта нефть тата газ кăлармалли государство планне иртерсе тултарнă. Предприятисенче нумай чаплă новаторсем ÿссе çитĕнчĕç, вĕсем паха ĕçĕсене пăрахса лайăххине [illegible] ĕçлекеннипе техника [illegible] нефть кăларас ĕçе [illegible] май параççĕ. Азербайджан ССР бюджечĕ тăрăх палăртнă укçа-тенкĕ республика промышленноçне, ялхуçалăхпе культурине малалла аталантармалли ĕçсене пурнăçлама май параççĕ.

— Совет Азербайджанĕн ĕççынисем,—сталинла мухтавлă традицисем тăрăх ĕçрешĕсем,—тет юлашкинчен Алиев юлташ,—хăйсен паттăр ĕçĕсемпе республикăн уйне кăларса пурса тăрăх хăйсен паха пурнăçне лайăхлатса, аслă Сталин ертсе пынипе пирĕн çĕршывра коммунизм строительствине хăйсен хăватне хывĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ).

В. В. Кузнецов депутат (РСФСР) халăх хуçалăхне аталантарас ĕçре хăватлă вăй пулса тăракан социализмлă ăмăрту сарăлни çинчен калать. Производство новаторĕсем, малта пыракан цехсемпе предприятисем куллен-кун хутшăнса пыраççĕ. Çĕр кăмрăк промышленноçĕнче çĕр кăмрăк кăларассине план тăрăх ĕçлесе ÿстерессишĕн, тимĕр-тăмăр промышленноçĕнче—хурçă хăвăрт ирĕлтерме шаратассишĕн, агрегатсемпе тата оборудованипе лайăхрах усă курассишĕн социализмлă ăмăрту сарăлнă. Машиностроени предприятийĕсем тимĕре хăвăрт ирĕлтерме мĕслетсене туса кăларасси анлăн сарăлнă.

Пирĕн çĕршывра халăх хуçалăхĕ ÿснĕ пекех культура лайăхланса пырать. Иртнĕ çул çĕршер пин рабочисемпе служащисем санаторисенче [illegible] канса илнĕ, [illegible] пионер лагерĕсем нумайланнă.

Пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн çитĕнĕвĕсем, тенĕ Кузнецов юлташ, капиталистла çĕршывсенчи ĕççынисене хавхалантараççĕ. 1951 çулта Совет Союзне ВЦСПС чĕннипе кăна ют çĕршывсенчен, вăл шутра Англирен, Францирен, США-ран, Италирен, Латинла Америка çĕршывĕсенчен, рабочисен профсоюзсен 79 делегацийĕ килнĕ.

— Пушкăрт АССР-ĕн ĕççынисем,—тет Ф. З. Загафуранов депутат,—коммунистсен партийĕ, Совет правительстви тата аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пынипе тăван республикăн хуçалăхне культура строительствинче чылай çитĕнÿсем тунă. Республика промышленноçĕ 1951 çулхи государство планне иртерсе тултарнă. Нефтяниксем Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçланă. Нефть кăларасси 23 процент ÿснĕ. Мĕнпур промышленность предприятийĕсем планран иртерсе 150 миллион тенкĕ укçа перекетленĕ.

Загафуранов депутат СССР Аслă шкулсен министерстви тата РСФСР Сутçĕ министерстви ялхуçалăх институчĕсемпе педагогика институчĕсем валли çуртсем лартса парас ĕçе чарса тăнине палăртать.

Юлашкинчен вăл ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне çирĕплетме сĕнет.

Хими промышленноçĕ министрĕ С. М. Тихомиров çĕршыва минераллă удобренисем, автомобиль шинисем, сăрăсем, [illegible] кирлĕ ытти продукцисем парса тăракан хими промышленноçĕн ĕçĕ çинчен каласа парать. Министерство предприятийĕсем иртнĕ çулхи плана иртерсе тултарнă. Анчах хими промышленноçĕ халăх хуçалăхне ÿсе пыракан ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтермест-ха. Уйрăмах [illegible] удобренисем тăвасси çителĕксĕр пырать. Уйрăм предприятисенче брак пирки тата вăхăтра продукци кăларман пирки пулакан тăкаксене пĕтермен, производство [illegible] расходсем пулаççĕ.

Тихомиров юлташ депутатсем асăрхатса каланине министерство шута илĕ, хими промышленноçĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕ, тет.

В. А. Протодьяконов депутат Якут АССР-ĕ хуçалăх культура строительствинче тунă çитĕнÿсем çинчен каласа парать. Республикăн пысăк территорийĕнче çĕнĕ промышленность предприятийĕсем, çĕнĕ [illegible], электростанцисем, шкулсем, больницăсем, клубсем тата ытти [illegible] тунă. [illegible] ялхуçалăх [illegible] Якут АССР-ĕнчи [illegible] халăхĕ [illegible] обществăллă хуçалăх [illegible] пулса тăрать.

— Якут халăхĕпе аслă вырăс халăхĕ хушшинче пулса тăнă тăванла историллĕ туслăх Якут халăх хуçалăхĕпе культурин мĕнпур облаçĕсенче çитĕнÿсем тумалли çăлкуçĕ пулса тăрать,—тет Протодьяконов депутат.

Протодьяконов депутат тухса каланипе Государство бюджечĕ çинчен пыракан прени вĕçленет. СССР Финанс министрĕ А. Г. Зверев юлашкинчен тухса калать.

— ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ,—тет вăл,—пирĕн çĕршыври коммунизм строительствин аслă задачисене пĕтĕмпех тивĕçтерет. Бюджет цифрĕсем мирлĕ ĕçе тытăннă совет халăхĕн хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе ирĕкне большевиксен партийĕпе пирĕн юратнă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм обществи тăвас ĕçе панине кăтартать. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Малалла Зверев юлташ Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕ Государство бюджечĕн тупăшĕсене 1.092.200 пин тенкĕ ÿстерме сĕнÿ пани çинчен калать. Çак укçа вăл 1952 çулхи бюджетăн тупăшне расходсенчен иртерсе тултарма кирлĕ. Министрсен Совечĕ Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕ панă сĕнÿпе килĕшет.

Лару председателĕ Бюджет комиссийĕн председателĕ И. С. Хохлов юлашки сăмах каламани çинчен пĕлтерет.

Национальноçсен Совечĕ ССР Союзĕ 1952 çулхи государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета çирĕплетет. Бюджета тупăшсем енĕпе 509.911.608 пин тенкĕлĕх, расходсем енĕпе 476.920.588 пин тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Тупăшсем расходсенчен 32.991.020 пин тенкĕ иртерессĕ.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен калакан Закона пурте пĕр шухăшлă пулса йышăнаççĕ.

Малалла кун йĕркинче тăракан тепĕр ыйтăва пăхса тухаççĕ. А. Ф. Горкин депутат сăмах илет. Вăл СССР Верховнăй Совет Президиумĕ иккĕмĕшпе виççĕмĕш сессисем хушшинче йышăннă Указсем çинчен пĕлтерет.

Национальноçсен Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Таджик ССР-ĕн Сталинабад облаçне пĕтересси çинчен; Грузи ССР-ĕнче Тбилисипе Кутаиси облаçĕсене туса хурасси çинчен; СССР Хула строительстви министерствине пĕтересси çинчен; Апат-çимĕçпе материальнăй резервсен государство министерствине пĕтересси çинчен; СССР Министрĕсен Совечĕн апат-çимĕç тата промышленность таварĕсем тăратас енĕпе ĕçлекен Государство Комитетне туса хурасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетет. Çавăн пекех Национальноçсен Совечĕ СССР Верховнăй Совет Президиумĕ СССР Электропромышленность министрĕ пулма Д. В. Ефремова, СССР Апат-çимĕç промышленность министрĕ пулма И. К. Сиволапа, СССР Тинĕс-Çар министрĕ пулма Н. Г. Кузнецова, СССР Тулашри суту-илÿ министрĕ пулма П. Н. Кумыкина, СССР Ялхуçалăх машиностроени министрĕ пулма С. А. Степанова, СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Комитечĕн председателĕ пулма Н. Н. Беспалова, СССР Министрĕсен Совечĕн апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем тăратас енĕпе ĕçлекен Государство Комитечĕн председателĕ пулма Д. В. Павлова уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указсене çирĕплетет.

Национальноçсен Совечĕ ялхуçалăх налогĕ çинчен калакан Закона хăшпĕр улшăнусем кĕртесси çинчен кăларнă Указа çирĕплетет.

СССР Конституцийĕн 25, 27, 70, 77-мĕш статьисене тивĕçлĕ улшăнусемпе хушусем кĕртме решени йышăннă.

Национальноçсен Совечĕн ларăвĕ хупăнни çинчен пĕлтерессĕ.

Çакăнпа СССР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ хăйĕн ĕçне пĕтерет.

ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ И. С. Хохлов депутат тунă содоклад

Депутат юлташсем! Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен çырнă отчета, Правительство Верховнăй Совета тăратнăскерсене, пăхса тухрĕ.

Государство бюджетне пурнăçласси, 1950 çулта пĕтĕм халăх вăрçă хыççăнхи сталинла пилĕк çуллăх плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртса ĕçленĕ тата халăх хуçалăхĕ хăватлăн çĕкленнĕ лару-тăрура пулса пычĕ. Çакă бюджета ăнăçлă пурнăçлама май пачĕ.

ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджечĕн тупăшĕсем—422,8 миллиард тенкĕ, расходсем—413,3 миллиард тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 9,5 миллиард тенкĕ ытларах пулчĕç.

Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1950 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен çырнă отчета, СССР Министрĕсен Совечĕ ырланăскере, унта тупăшсемпе расходсем çÿлте асăннă чухлĕ пулнине çирĕплетме сĕнет.

ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетĕнче тупăшсем 508,8 миллиард тенкĕ, пĕлтĕрхинчен 40,8 миллиард тенкĕ ытларах, расходсем—476,9 миллиард тенкĕ, 1951 çулхинчен 35,6 миллиард тенкĕ ытларах пулмалла. Тупăшсем расходсенчен 31,9 миллиард тенкĕ ытларах пулмалла тума палăртнă.

Государство бюджечĕн тупăшĕсем çапла пулмалла:

	Сумма (миллиард тенкĕпе)	Бюджетри удельнăй висе (процентпа)
1. Государствăпа коопераци предприятийĕсенчи тата организацисенчен кĕрекен укçа	423,8	83,3
2. Государство налогĕсемпе тата ытти енĕпе пухăнакан укçа	47,4	9,3
3. Государство заемĕсене халăх хушшине сарнипе пухăнакан укçа	37,6	7,4

Бюджет тупăшĕсенче социализмлă хуçалăхран кĕрекен укçа тĕп вырăнта тăрать. Государство предприятийĕсен услăмĕсенчен илекен тупăш нумай ÿсмеллине уйрăмах палăртас пулать. Ку енĕпе 1952 çулта 62 миллиард тенке яхăн, пĕлтĕрхинчен 29,2 процент ытларах укçа пухăнмалла.

Государство бюджетĕнчи тупăшсем ÿсесси çакăнтан килет: социализмлă экономикăна малалла аталантарса пынинчен, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче продукцисем туса кăларасси ÿснинчен, продукцин пахалăхне лайăхлатмалли задачисене пурнăçлассинче çĕнĕ çитĕнÿсем тунинчен. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, иртнĕ çулта СССР халăх хуçалăхĕнче промышленность туса кăларакан продукцин хисепĕ нумай ÿсрĕ, кунта чи пахи вăл—çав производство ÿснипе хатĕрленĕ продукцин пĕтĕм хисепĕн висĕ пайĕнчен икĕ пайне ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пынипе туса кăларнинче пулса тăрать. «Ĕç тухăçлăхĕ вăл, юлашкинчен, çĕнĕ обществăллă строй çĕнтересси чи пахи, чи кирли пулса тăрать», тесе вĕрентет В. И. Ленин.

Пирĕн çĕршывра куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси хăвăрт ÿсет, вăрçă хыççăнхи вăхăтра пур таварсен хакĕсене те майĕпен йÿнетсе пырас пирки Сталин юлташ панă кăтартусем çирĕппĕн пурнăçланса пыраççĕ. Совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕ тăтăшах лайăхланса тата совет укçин хакĕ çирĕпленсе пырать. Çакă тавар çаврăнăшне малалла вăйлатса пымалли тата государство бюджечĕн тупăшĕсене пурнăçламалли условисене лайăхлатать.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнче расходсем 476,9 миллиард тенкĕ пулмалла тунă. Çав хисепрен: халăх хуçалăхне 180,4 миллиард тенкĕ е 37,8 процент, социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсем валли 124,8 миллиард тенкĕ е 26,2 процент, хĕçпăшаллă вăйсене тытса усрама 113,8 миллиард тенкĕ е 23,9 процент пама палăртнă.

ССР Союзĕн государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн висĕ пайĕнчен икĕ пайне яхăн халăх хуçалăхне тата социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсене пурнăçлама каять. Халăх хуçалăхĕн 1952 çулхи планĕ тăрăх капитальнăй ĕçсене 143,1 миллиард тенкĕлĕх тума, çав шутран ку ĕçсем валли государство бюджетĕнчен 98,1 миллиард тенкĕ пама палăртнă. Социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсем валли, урăхла каласан, халăха вĕрентес ĕç, сывлăха сыхлас ĕçпе физкультура, государствăн социальнăй страхованийĕ, социальнăй обеспечени валли тата нумай ачаллă ача амăшĕсемпе ачаллă пĕччен хĕрарăмсене государство пособийĕ пама пĕтĕмпе пĕлтĕрхинчен 6 миллиард тенкĕ яхăн ытларах расходламалла.

Халăх хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарма укçа-тенкĕ нумай панинчен çакă курăнать: Совет Союзĕн бюджечĕ вăл—мирлĕ строительство бюджечĕ. Вăл пирĕн çĕршыври коммунизм строительствин пĕтĕм чаплă палăртса тăрать. Çав чаплă ĕçсем вĕсем пирĕн çĕршывра сталинла саманари питĕ пысăк сооруженисене тунинче пулать, ку сооруженисене пирĕн халăх коммунизмăн аслă стройкисем тесе ят пачĕ. Çакă вара большевиксен партийĕ, Совет правительстви, Сталин юлташ мирлĕ политика тытса пынине питĕ лайăх кăтартса парать.

Союзлă советлă социализмлă республикăсен государство бюджечĕсем пĕрле пĕтĕмпе 98.757 миллион тенкĕ чухлĕ пулаççĕ. Союзлă республикăсен бюджечĕсенчен халăх хуçалăхне тата социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсем валли 88.398 миллион тенкĕ, пĕтĕм укçа-тенкĕн 90 процентне яхăн каять.

Союзлă республикăсен хуçалăхпа культура строительстви нумай ÿснĕ май республикăсен хуçалăхĕ хăватлăн çĕкленсе пычĕ, формипе—нациллĕ, содержанийĕпе—социализмлă культура чечекленчĕ. Çаксене ленинла-сталинла наци политикине пурнăçланипе, коммунистсен партийĕ, Совет Правительстви, Сталин юлташ нациллĕ республикăсен халăх хуçалăхĕпе культурине аталантарассишĕн тăрăшнипе тума пултарнă.

Депутат юлташсем! ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне тĕрĕс тата халăх хуçалăх планĕпе килĕшÿллĕн туса хатĕрленĕ. Бюджет комиссийĕ СССР Министрĕсен Совечĕ тăратнă государство бюджетне, унти тупăшсемпе расходсен хисепне, çакăн пек тÿрлетÿсем кĕртсе çирĕплетме сĕнет:

Государство бюджечĕн тупăшĕсен хисепне тата 1.092,2 миллион тенкĕ ÿстерме, çав шутра оборотран илекен налога—734,8 миллион тенкĕ, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсенчен кĕрекен тупăша—20,6 миллион тенкĕ, халăхран пухакан налогсем енĕпе—15,4 миллион тенкĕ, государство заемĕсене сарнинчен пухăнакан укçа енĕпе—100 миллион тенкĕ, тĕрлĕ налоглă мар укçасене пухас енĕпе 36 миллион тенкĕ ÿстерме сĕнетпĕр.

Оборотран илекен налог енĕпе укçа-тенкĕ бюджета кĕрессине çак майсемпе ÿстермелле:

а) продукци ассортиментне лайăхлатнă тата продукци нумайрах сутнă шутпа—338,3 миллион тенкĕ, çав шутран: Хатĕрлев министерстви енĕпе—100 миллион тенкĕ, Апат-çимĕç министерстви енĕпе—147 миллион тенкĕ, Çăмăл промышленность министерстви енĕпе—60 миллион тенкĕ, Аш-какайпа сĕт-çу промышленность министерстви енĕпе 31,3 миллион тенкĕ;

б) Правительство куллен кирлĕ таварсене хушса туса кăларма тата сутма решенисем йышăннă май, тупăшсем 396,5 миллион тенкĕ ÿсмелле, çав шутран: Апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе—219,3 миллион тенкĕ, Нефть промышленность министерстви енĕпе—86,4 миллион тенкĕ, Аш-какайпа сĕт-çу промышленность енĕпе—40,9 миллион тенкĕ.

Тупăшсенчен илекен укçан хисепне тепĕр хут тĕплĕ шутласа тухнă тăрăх, тупăшсем тата çакăн чухлĕ ÿсмелле: Çул-йĕр министерстви енĕпе—50 миллион тенкĕ, Хатĕрлев министерстви енĕпе—21 миллион тенкĕ, Апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе—15 миллион тенкĕ, Суту-илÿ министерстви енĕпе—45 миллион тенкĕ, Çĕр мамăк министерстви енĕпе—5 миллион тенкĕ тата Государство страхованийĕн Главнăй управленийĕ енĕпе 70 миллион тенкĕ.

Халăхран пухакан подоходнăй налог пухăнассине тĕплĕн тĕрĕслесе пăхнă май ку енĕпе 15,4 миллион тенкĕ ÿсет.

Государство заемĕсем енĕпе перекет кассисем заемсем илнĕ шутпа тата 100 миллион тенкĕ пухăнать.

Налогсăр пуçне пухăнакан ытти укçасем енĕпе 36 миллион тенкĕ ÿсет, çакă Государство пурлăхне сутнинчен пухăнакан тупăшсене тепĕр хут тĕплĕ шутласа тухнинчен курăнать.

Çĕнĕрен палăртнă тупăшсенчен пухăнакан 1.092,2 миллион тенкĕне Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетĕнче тупăшсем расходсенчен нумайтарах пулмалла тесе кĕртме сĕнет.

Бюджет материалĕсене тĕпчесе вĕреннĕ хыççăн Бюджет комиссийĕ чылай ыйтусем тăрăх хăй тунă асăрхаттарусем çинчен Национальноçсен Советне пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать.

Калас пулать, финанс органĕсен ĕçĕ 1951 çулта чылай лайăхланчĕ. Бюджета тупăшсем енĕпе пурнăçлас ĕçре финанс работникĕсем пысăк активлăх кăтартрĕç, лайăх çитĕнÿсем тума пултарчĕç. Государствăн 1951 çулхи бюджечĕн тупăшĕсене иртерсе пурнăçланă.

Çавăнпа пĕрлех Бюджет комиссийĕ финанс органĕсен ĕçĕнчи хăшпĕр çитменлĕхсене палăртать, çав çитменлĕхсем государство бюджетне сиен кÿреççĕ.

1. Финанс ĕçĕнчи хăшпĕр работниксен, предприятисемпе организацисен оборотран мĕн чухлĕ налог памаллине тĕрĕс шутласа хунине тĕрĕслесе тăракан работниксен квалификацийĕ çаплах çителĕксĕр-ха. Çавна пула, Государство тупăшĕсен инспекторĕсем предприятисене тĕрĕсленĕ чухне, вĕсенче законсене пăснисене тупса палăртаймаççĕ, законсене пăсакансем наказани илмесĕрех юлаççĕ. СССР Финанс министерствин работникĕсем предприятисене тепĕр хут тĕрĕсленĕ чухне 1951 çулта оборотран илмелли налога 29 миллион тенкĕ хушса шутласа панă.

2. Вырăнти финанс органĕсем хăшпĕр чухне бюджет шучĕпе расходсене витме укçа памалли материалсене тĕплĕ тĕрĕслемеççĕ, çавна пула укçа тĕрĕс мар пани те пулкалать. Украина ССР-ĕ тăрăх 1951 çулта материалсене тĕплĕ тĕрĕслемесĕр пĕтĕмпе 2.316 пин тенкĕ, Казах ССР-ĕнче 576 пин тенкĕ панă пулнă.

3. Бюджет комиссийĕ çапла шутлать: сутăç министерствисемпе сывлăх министерствисем социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсем валли тухакан расходсен планĕсене тунă чухне шкулсемпе больницăсен хисепне тата вĕсенче ĕçлекенсен шутне ÿстерсе кăтартаççĕ. Çакă вăл, вырăнти хăшпĕр органсем укçа-тенкĕ кирлĕрен пек парса тăманнипе пĕр вăхăтрах, социальнăй ĕçсемпе культурăллă ĕçсем валли бюджетран памалли укçа-тенкĕпе тăтăшах çителĕксĕр усă курнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Финанс министерстви халăха вĕрентес ĕçпе сывлăха сыхлас ĕç валли укçа пама ыйтса çырнă материалсене çителĕклĕ тишкерсе тухмасть.

СССР Финанс министерствин асăннă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Пирĕн çĕршывра строительствăна нумай укçа-тенкĕ хываççĕ. Государство капитальнăй ĕçсем тума хывакан укçа-тенкĕ çулсерен ÿссе пырать. Пурте пĕлеççĕ, пĕлтĕр çав укçа-тенкĕн хисепĕ 12 процент ÿснĕ. 1952 çулта капитальнăй ĕçсем тума укçа-тенкĕ тата ытларах хывма палăртнă.

1951 çулта строительство организацийĕсем строительство хакне тата строительство срокне чакарнă. Анчах нумай организацисем строительствăпа монтаж хакне йÿнетмелли задание тултараймаççĕ. Пывăр промышленность предприятийĕсем тата Машиностроени предприятийĕсем тăвакан министерствăсене пăхăнса тăракан строительство организацийĕсем строительство хакне ÿстернĕ.

Строительство хакне çавăн пекех Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерствине пăхăнса тăракан строительство организацийĕсем те ÿстернĕ. Сăмахран, Главвостокстройăн Орскри строительствăпа монтаж управленийĕ, строительство ĕçĕсене çителĕксĕр йĕркеленипе, 5,8 миллион тенкĕ убыток тунă. Асăннă управлени руководителĕсем государство укçа-тенкине перекетлессишĕн кĕрешмен. Управленире накладнăй расходсем сметăра палăртнинчен висĕ хута яхăн ытларах пулнă. «Пашийцемстрой» трест ĕç укçи ытлашши пĕтерсе тата расценкăсемпе тĕрĕс мар усă курса строительство хакне 77 процент ÿстернĕ.

Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерствине пăхăнса тăракан чылай стройкăсенче строительство хакĕ ÿсни хуçасăрлăхран килет. Главзападцемент 408 пин тенкĕ тăракан цемент арманне малтан Новороссийск хулинчи «Пролетарий» завода, унтан—Ленинграда, Ленинградран—Сталино облаçĕнчи Енакиево хулине куçарнине хуçасăрлăх тенинчен урăхла хак пама çук. Асăннă главк 383 пин тенкĕ тăракан йывăр пластинчатăй питателе малтан Новороссийск хулинчи «Пролетарий» завода, унтан—Красноярск хулине, Красноярскран—Кемерово облаçĕнчи Яшкински цемент заводне ăсатнă. Е тата тепĕр тĕслĕх—619 пин тенкĕ тăракан грейфернăй мостовой крана Новороссийскран Волковысска, Волковысскран — Днепропетровска ăсатнă. Çавăн пек тĕслĕхсем пĕрре çеç пулман.

Строительствăна организацилес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнипе Строительство материалĕсем тăвакан промышленность министерстви 1951 çулта капитальнăй ĕçсем тума уйăрса панă укçа-тенкĕпе усă курман, предприятисемпе çуртсем туса пĕтерсе ĕçе ямалли плана питех çителĕксĕр тултарнă.

Çавăн пекех капитальнăй ĕçсем тума уйăрса панă укçа-тенкĕрен чылайăшĕпе Хура металлурги министерстви, Тĕслĕ металлурги министерстви, Нефть промышленность министерстви, Электростанцисен министерстви тата Çĕр кăмрăк промышленность министерстви усă курманнине палăртас пулать. Çаксем пысăк та кирлĕ чылай предприятисене туса пĕтерсе ĕçе ярассине чăрмантарнă.

Плана тултарман тата строительство хакне ÿстерекен организацисем халăх хуçалăхне сиен кÿреççĕ. Çавăн пек организацисен руководителĕсене государство заданийĕсене çирĕп пурнăçласа пыма, хуçалăхра йĕркелĕх тума хушас пулать.

Государство бюджетне тупăш енĕпе тултарасси кашни предприяти плана тултарнинчен тата шалти резервсене мобилизацилениннчен нумай килет. Иртнĕ çулхи итогсем çакна кăтартаççĕ: социализмлă промышленность, производство планне иртерсе тултарса, продукцин хăйне ларакан хакне чакарса, 26 миллиард тенкĕ ытла перекетленĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн кĕрешес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса пыракан нумай предприятисенчен Магнитогорскипе Кузнецк металлурги комбиначĕсене асăнма пулать. 1951 çулта ку предприятисем ĕç тухăçлăхне хăпартмалли, продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли

(Малалли 3-мĕш страницăра.)

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ И. С. Хохлов депутат тунă содоклад

(Малалли. Пуçламăшĕ 2 стр.).

плана ирттерсе тултарнă. И. В. Сталин ячĕпе тăракан Магнитогорски металлурги комбиначĕ çĕршыва планран ирттерсе 213 пин тонна чугун, 73 пин тонна хурçă, 36 пин тонна прокат пачĕ. Чĕртавар, материалсемпе электроэнерги тата ыттисене перекетлесе планран ирттерсе 27,6 миллион тенкĕ, вăл шутра продукцин хăйне ларакан хакне планран ирттерсе йÿнетсе 18,5 миллион тенкĕ тупăш тунă.

Çавăн пекех И. В. Сталин ячĕпе тăракан Кузнецк металлурги комбиначĕ те планран ирттерсе нумай чугун, хурçă тата прокат туса кăларнă. Вăл планран ирттерсе 23,8 миллион тенкĕ, çав шутра—продукцин хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен ытларах йÿнетсе 20 миллион тенкĕ тупăш тунă.

Йывăр промышленноçпа çăмăл промышленноçри тата промышленноçăн ытти отраслĕсенчи нумай предприятисем планран ирттерсе продукци туса кăларнă тата чылай перекетлĕх тунă.

Хатĕрлев министерствине пăхăнса тăракан арман промышленноçĕнчи предприятисем те çитĕнÿсем тунă. Арман промышленноçĕнчи ĕçлекенсем, ученăйсемпе çыхăнса ĕçлесе, çăнăха çĕнĕ технологи тăрăх авăртма хăнăхса çитнĕ, чи лайăх тата пĕрремĕш сорт çăнăх 35 процентран 47 процент таран, уйрăм предприятисенче вара—50—55 процент таран туса кăларма тытăннă. Çак мероприяти висĕ çул хушшинче государствăна икĕ миллиард тенкĕ ытла тупăш панă.

Анчах пирĕн лайăх ĕçлекен предприятисемпе пĕрлех производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне тултарса пырайман предприятисем те пур-ха.

Вăрман промышленность министерстви çав-çавах юлса пырать. Правительство ку министерствăна, уйрăмах предприятисене çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе, пысăк пулăшу пачĕ. 1951 çулта вăрман промышленноçĕн тĕп фончĕсем 23 процент ÿснĕ. Апла пулин те, вăрман промышленность министерстви—пĕртен-пĕр министерство—производство планне тултараймарĕ, хăйне пăхăнса тăракан предприятисенче механизмсемпе усă курас ĕçе лайăхлатаймарĕ.

Техникăпа усă курас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнипе тата хуçасăрлăх пирки тăкаксем пулнипе механизмсемпе хатĕрлекен йывăçăн хăйне ларакан хакĕ пысăк, нумай предприятисенче вара каснă йывăçа механизмсемпе çул хĕррине илсе тухасси лавсемпе турттарнинчен те хаклăраха ларнă. 1951 çулта продукцин хăйне ларакан хакĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, ÿснĕ. Министерствăна пăхăнса тăракан предприятисем нумай йывăçа *вăрмантан турттарса кăлармасăр хăвараççĕ*, çавăн пирки йывăç пăсăлать тата вăрмана çийĕнчех тасатаймаççĕ. Вăрман промышленность министерствин каснă йывăçа турттарса кăларма тата хатĕрлекен пур йывăç материалсемпе те лайăх усă курма мерăсем йышăнас пулать. Çапла туни продукцин хăйне ларакан хакне чылай чакарма май парать. Çавăн пекех Вăрман промышленность министрĕн Орлов юлташăн министерствăна пăхăнса тăракан предприятисен ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмалла.

1951 çулхи çирĕплетнĕ производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли плана пĕтĕмĕшпе ăнăçлă тултарнă министерствăсене пăхăнса тăракан хăшпĕр предприятисенче производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли задание тултарманнипе чылай тăкаксем пулнă. Çав предприятисен ĕçне лайăхлатни производствăна малалла аталантарма, тупăш илессине ÿстерме пулăшакан май пулать.

Сăмахран, автомобильпе трактор промышленность министерствине пăхăнса тăракан хăшпĕр предприятисем производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли задание пурнăçламан. Çак министерствăн Владимир хулинчи завочĕ продукцин хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен 10,5 процент ÿстернĕ, иртнĕ çула убыток тунипе вĕçленĕ.

Производство планне тата продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли задание çавăн пекех Станкостроени министерствине пăхăнса тăракан хăшпĕр предприятисем те тултарман.

Хура металлурги министерствине пăхăнса тăракан «Азовсталь» заводпа «Запорожсталь» завод 1951 çулта прокат тунă çĕрте çурма фабрикат тата чĕртавар нормăран ирттерсе 38 миллион тенкĕлĕх пĕтернĕ.

Сталин юлташ çапла вĕрентет: «Таварсен хакне тăтăш чакаракан промышленность çеç, продукцин хăйне ларакан хакне тăтăш чакарни çине таянса тăракан промышленность çеç, çавна май хăйĕн производствине, техникине тата ĕçе организацилессине, хуçалăха ертсе пымалли меслетсемпе формăсене тăтăш лайăхлатакан промышленность çеç,—çавăн пек промышленность кăна пире кирлĕ, вăл çеç малалла аталанма пултарать, вăл çеç пролетариата пĕтĕмĕшпех çĕнтерме пулăшать», тенĕ.

Пирĕн Сталин юлташăн асăннă кăтартăвне яланах асра тытмалла, хамăрăн пĕтĕм ĕçре ăна пурнăçласа пымалла.

СССР Верховнăй Совечĕн иртнĕ сессийĕсенче бюджет комиссийĕ, министерствăсенче автотранспорта лайăхрах пăхса усраса, унпа усă курас ĕçе лайăхлатас, автомашинăсене юсамалли мастерскойсем уçас, унта запаслă пайсем туса кăларас тата кивисене юсас ĕçе йĕркелес ыйту *кăларса тăратнăччĕ. Халĕ халăх хуçалăхĕнче* автомашинăсен хисепĕ тата ытларах ÿсрĕ. Уйрăм *министерствăсен автомашинăсем* нумай, анчах вĕсене лайăх пăхса усрамаççĕ, вĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ.

Иртнĕ сессисенче критикăланă министерствăсем автотранспортпа усă курас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ. Çакăнта калани пуринчен малтан Апат-çимĕç промышленность министерствипе Хатĕрлев министерствине тивет. 1951 çулта вĕсен нумай автомашинисем юсавлă пулманнипе ахаль ларнă. Автомашинăсемпе çителĕксĕр усă курнине запаслă пайсем çитменнипе сăлтавлама пăхни тĕрĕс мар. Чăн, запаслă пайсем кирлĕ, вĕсене туса кăларассине ÿстерме тăрăшмалла. Анчах запаслă пайсем централизованнăй йĕркепе илнинчен пуçне, автомашинăсем юсакан мастерскойсенче кивĕ запаслă пайсене юсаса çĕнетес тата çĕнĕ пайсем туса кăларас ĕçе те йĕркелени кирлĕ. Министерствăсене автотранспорт хуçалăхне ертсе пырас ĕçре татăклă улшăнусем тума, автопаркпа усă курас ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме хушас пулать.

Депутат юлташсем! Совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе хăйĕн пĕтĕм вăйне мирлĕ, пултаруллă та чыслă ĕçе, социализмлă Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн парать.

Совет çыннисем пысăк хастарлăхпа коммунизмăн аслă стройкисене тăваççĕ, çутçанталăка çĕнетсе улăштармалли сталинла плана пурнăçа кĕртеççĕ, коммунизм обществин материально-техникăллă никĕсне тăваççĕ.

Пирĕн çĕршывра металл, машинăсем, пир-авăр, тумтир, атă-пушмак туса кăларасси, топливо хатĕрлесси, гражданла промышленноçăн ытти продукцине туса кăларасси пĕрмай ÿсе пырать. Колхозсемпе совхозсем халăха апат-çимĕç, промышленноçа—чĕртавар ытларах та ытларах параççĕ. Совет халăхĕн пурнăç шайĕ пĕрмай ÿсет.

Хамăр çĕршывра коммунизм тумалли сталинла программăпа хавхаланса, рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ социализмлă ăмăртăва анлăран та анлă сараççĕ. Кашни кун халăх хуçалăх планне тултарассишĕн пыракан пĕтĕм халăх кĕрешĕвĕнчи ĕçсыннисен хăватлă активлăхĕпе иксĕлми творчествăллă пуçарулăхне çĕнĕрен кăтартса парать.

Халăх хуçалăх задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе СССР Государство бюджечĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Бюджет планра çирĕплетнĕ ĕçсене укçа-тенкĕ енчен тивĕçтерет. Финанс работникĕсен, учрежденисен, организацисен тата предприятисен Государство бюджетне тупăш енĕпе тултарма, халăх хуçалăх планне тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн кĕрешме хăйсен пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлемелле.

Большевиксен партийĕ кăтартса панă çулпа пыракан Совет халăхĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене, 1952 çулхи Государство бюджетĕнче палăртнă пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçланасса пĕр *иккĕленмесĕр шанса тăрать. Пирĕн мăнаçлă ĕçе, эпир коммунизм патне пыракан* юхăма совет халăхĕн мĕнпур çĕнтерĕвĕсене организацилекен, хавхалантаракан пирĕн мухтавлă коммунистсен партийĕ, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пырать. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

СССР Финанс министрĕ А. Г. ЗВЕРЕВ юлташкинчен тухса калани

Депутат юлташсем! СССР Министрĕсен Совечĕ СССР Верховнăй Советĕнче çирĕплетме тăратнă ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне тата 1950 çулхи бюджета пурнăçлани çинчен тăратнă отчета Национальноçсен Советĕнче пур енчен те тĕплĕ сÿтсе яврĕç.

Депутатсем хăйсен сăмахĕсенче, пĕр шухăшлă пулса çакна палăртрĕç: 1952 çулхи бюджет, ăна халăх хуçалăхне аталантармалли планпа килĕштерсе тунă, социализмлă экономикăна малалла çĕклеме, совет халăхĕн пурнăçне пĕрмай лайăхлатса пыма тата культурине ÿстерме укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăрать. ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас тĕлĕшпе тăракан аслă задачăсене пĕтĕмпех тивĕçтерет. Бюджетри цифрăсем çакна уççăн кăтартса параççĕ: совет халăхĕ, мирлĕ ĕç туса пурăнакан халăх, большевиксен партийĕ тата пирĕн юратнă çулпуçăмăр учитель Сталин юлташ ертсе пынипе хăйĕн пĕтĕм вăй-хăватне тата пултарулăхне коммунизм строительствине парать. (Алă çупаççĕ).

Национальноçсен Совечĕн Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнчи тупăшсене оборотран илекен налогсем енĕпе 734 миллион та 800 пин, усламран илекен укçа енĕпе 206 миллион тенкĕ, халăхран илекен налогсем енĕпе 15.400 пин тенкĕ, государствăн перекет кассисем илекен государство заемĕсем енĕпе 100 миллион тенкĕ, сборсемпе тĕрлĕ тупăшсем енĕпе 36 миллион тенкĕ, пĕтĕмпе 1.092.200 пин тенкĕ ÿстерме сĕнÿ пачĕ. Бюджет комиссийĕ çак тупăшсене ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетĕнчи тупăшсене расходсенчен пысăклатас ĕçе пама сĕнет.

СССР Министрĕсен Совечĕ çак сĕнÿсене пăхса тухрĕ тата Национальноçсен Советне çапла пĕлтерме хушрĕ: СССР Правительстви Бюджет комиссийĕн сĕнĕвĕсемпе килĕшет.

Бюджета сÿтсе явнă чухне депутатсем уйрăм министерствăсемпе ведомствăсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартса пачĕç. Депутатсем министерствăсемпе ведомствăсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен асăрхаттарса каланисем çине тимлĕн пăхмалла, министрсен тата ведомствăсен руководителĕсен хăйсен ĕçне критикăланине шута илсе, депутатсем кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

ССР Союзĕн Министрсен Совечĕ депутатсем кăтартса панине пăхса тухать тата вĕсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнать, çавăн пекех министерствăсемпе ведомствăсен ĕçне лайăхлатма мерăсем йышăнать.

Хохлов депутат хăшпĕр финанс органĕсем предприятисемпе организацисем оборотран илекен налога тĕрĕс шутласа панине тĕрĕслес, çавăн пекех тĕрлĕ расходсене бюджетри укçапа саплас тĕлĕшпе тăратнă отчетлă материалсене тĕрĕслес енĕпе пысăк çитменлĕхсем тунине палăртрĕ. Брянск, Тула, Орел тата Ярославль облаçĕсенче вырăнти бюджета çителĕксĕр тултарни çинчен Черноусов депутат каларĕ. РСФСР Финанс министерствин республикăри финанс органĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме, бюджета çирĕп пурнăçлама тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Кунпа пĕрлех СССР Финанс министерстви бюджета пурнăçласси çинчен асăрхаттарса каланисенчен тивĕçлĕ выводсем тăвать тата государство тупăшĕсем енĕпе уйрăм финанс органĕсен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнать.

Финанс органĕсен оборотран илекен налог тăрăх тăратакан отчетсене тĕплĕ тата çирĕп тĕрĕслес пулать, бюджетран илекен укçапа тĕрлĕ тÿлевсем туни çинчен тăратакан документсене те тĕплĕ тĕрĕслемелле. Социально-культурăллă ĕçсем валли паракан укçапа усă курни çинчен калас пулсан, çакна палăртмалла: 1950 çулта çак ĕç валли бюджетран панă укçапа 96,7 процент, 1951 çулта 98,4 процент, урăхла каласан, 1950 çулхинчен туллирех усă курнă.

Депутатсем хăйсен сăмахĕсенче çитес çулсенче чылай республикăсенче хуçалăхăн тĕрлĕ отраслĕсене аталантарассине вăйлатма кирлине палăртрĕç. Ялхуçалăх, хими промышленность, апат-çимĕç промышленность, вăрман промышленность, электростанцисен, строительство материалĕсен промышленность министерствисен т. ыт. министерствăсен, депутатсем тăратнă сĕнÿсене пăхса тухса, çав сĕнÿсем тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Хăшпĕр депутатсем 1952 çулта планпа палăртман ĕçсене пурнăçлама бюджетран укçа хушса пама ыйту лартрĕç. Депутатсен çав сĕнĕвĕсем çине тимлĕ пăхас пулать тата вĕсене халăх хуçалăхĕн планне пăхса тухнă чухне асра тытмалла. Капитальнăй ĕçсене ÿстернĕ май укçа-тенкĕ кăна мар, материалсемпе оборудовани те ытларах уйăрма тивет. Çавăнпа та кăтартса панă ĕçсем валли укçа уйăрса парасси çинчен СССР Министрĕсен Советĕнче уйрăммăн пăхса тухмалла пулать.

Депутат юлташсем! Совет халăхĕ большевиксен партийĕ ертсе пынипе коммунизмăн материально-техникăллă базине тумалли программăна ăнăçлă пурнăçласа пырать. Партипе правительство халăх хуçалăхне малалла аталантарас, халăхăн пурнăçне лайăхлатас тата культурине ÿстерес тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлас ĕçре бюджета тупăшсем енĕпе пурнăçлани тата бюджетри укçа-тенкĕне перекетлĕ расходлани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çакă вăл производствăпа финанс планне тултарас енĕпе министерствăсен, ведомствăсен, предприятисемпе организацисен ответлăхне ÿстерет.

Техникăпа усă курас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес, чĕртавара, материалсене, топливăна перекетлес, усăсăр пулакан расходсене пĕтерес, производствăпа строительствăра накладной расходсене чакарас, администраципе хуçалăх аппаратне тытса тăрассине йÿнетес тĕлĕшпе пуçарнă кĕрешĕве активлăрах тата анлăрах сарса пырас пулать.

СССР Государство бюджетне ăнăçлă тултарасси финанс органĕсемпе банксен ĕçне çулĕ пусăма çĕклеме, предприятисемпе организацисен хуçалăхлă ĕçне укçана тĕрĕслесе тăрассине вăйлатма хушать.

Нумай нацилĕ совет халăхĕ пĕр шухăшлă пулса пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварассишĕн тăрать, совет халăхĕ генилле çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм тумалли аслă плансене пурнăçлас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн пĕр шухăш-кăмăлпа кĕрешет. (Пĕтĕм зал тăвăллăн алă çупать).

ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнăçлани çинчен

Союз Совечĕн Бюджет комиссийĕн Председателĕ Л. Р. Корнец депутат тунă содоклад

Депутат юлташсем! Совет халăхĕ коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Сталин юлташ ертсе пынипе государство планĕсене тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, коммунизм строительствин программине пурнăçа кĕртессишĕн питех те пысăк хавхаланупа кĕрешет.

Малта пыракан техникăпа лайăхрах усă курассишĕн, материалсене, чĕртавара, топливăпа электроэнергие перекетлессишĕн пыракан юхăм пĕтĕм çĕршывра çĕнĕ вăйпа сарални 1951 çулта промышленноçра рабочисен ĕç тухăçлăхне 10 процент ÿстерме тата промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне йÿнетме палăртнă задание ирттерсе пурнăçлама май пачĕ. Хăйне ларакан хака йÿнетнине пула 26 миллиард тенкĕ ытла перекетленĕ.

Колхозниксем, совхозсемпе МТС-сен работникĕсем социализмлă çĕрĕçне аталантарас, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас, çавăн пекех колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç.

ССР Союзĕн халăх хуçалăхĕ хăватлăн вăйланнине пула ĕçсыннисен пурнăçĕ малалла лайăхланчĕ, культурăллă шайĕ ÿсрĕ. Коммунизм обществи тăвас ĕçре совет наукин, литературăпа искусствăн вырăнĕ ÿсрĕ, вĕсем пурнăçпа, практикăпа тачăрах çыхăнса тăма тытăнчĕç.

Халăх хуçалăхĕн планлă заданийĕсене ăнăçлă пурнăçлани, социализмлă хуçалăхăн накопленийĕсем чылай ÿсни 1951 çулхи государство бюджечĕн тупăшĕсене ирттерсе тултарма май пачĕ, 1952 çулта халăх хуçалăхне малалла вăйлатма условисем туса пачĕ.

Депутат юлташсем! Бюджет комиссийĕ Правительство СССР Верховнăй Советне çирĕплетме тăратнă ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне пăхса тухрĕ.

ССР Союзĕн 1952 çулхи Государство бюджетне социализмлă экономикăпа культурăна малалла аталантарас, совет халăхĕн пурнăçне татах та лайăхлатас тĕллевпе тунă.

Государство бюджечĕн тупăшĕсем 1952 çулта, 1951 çулхипе танлаштарсан, 40,8 миллиард тенкĕ ытларах, расходсем — 35.6 миллиард тенкĕ ытларах пулаççĕ.

Бюджетăн тĕп тупăшĕсем, иртнĕ çулсенчи пекех, социализмлă предприятисемпе организацисем паракан укçа пулса тăрать. 1952 çулта оборотран илекен налог енĕпе тата усламран уйăрса илнипе кăна бюджета 322 миллиард тенкĕ укçа кĕрет, ку вăл бюджетри мĕнпур тупăшсенчен 63 процент ытларах пулать.

1952 çулта, 1951 çулхипе танлаштарсан, бюджетра халăхран пухакан тÿлевсен хисепĕ пĕчĕкленет, вăл 9 процентран кăшт çеç ытларах пулать. Совет Союзĕнчи халăх 1951 çулта государствăна налогсем 44 миллиард тенкĕ тÿленĕ, çав вăхăтрах государствăран пособисем, социальнăй страховани енĕпе илекен тÿлевсем, пенсисем, нумай ачаллă тата ачаллă пĕччен амăшĕсене паракан пособисем тата ытти тÿлевсемпе çăмăллăхсем 125 миллиард тенкĕ, урăхла каласан 3 хута яхăн ытларах илнĕ.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетĕнче халăх хуçалăхĕ валли тата социальнăй ĕçсемпе культура ĕçĕсем валли 305 миллиард тенкĕ е 64 процент ытларах расходлама палăртнă.

Государство бюджечĕ тăрăх хамăрăн Тăван çĕршывăн оборонине малалла тĕреклетме кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрма палăртнă. Çав вăхăтрах 1952 çулта, вăрçăчченхи 1940 çулпа танлаштарсан, оборона валли каякан укçа-тенкĕ бюджетра чылай пĕчĕкрех процент йышăнать.

Мир тăшманĕсем, вăрçă чĕртекенсем пирĕн çĕршыв çинчен кирек мĕнле элеклесен те, бюджетри цифрăсемпе фактсем хăйсем çинчен хăйсемех калаççĕ. Çак цифрăсем Совет государствин мирлĕ политикине, пирĕн халăхăн пурнăçĕ малалла лайăхланса пынине, Совет Союзĕн экономикăллă вăй-хăвачĕ вăйланнине кăтартса параççĕ.

«...Пĕр государство та,— кăтартса парать Сталин юлташ,— вăл шутра Совет государстви те, бюджетран вуншар миллиард расход кăларса, гражданла промышленноçа вирлĕн вăйлатма, Атăл, Днепр, Аму-Дарья çинчи гидростанцисем пек аслă стройкăсене тытăнма, çавнашкалах бюджетран вуншар миллиард расход кăларса, халăх кирлĕ таварсен хакне пĕрмаях йÿнетес политика тытса пыма, нимĕç оккупанчĕсем аркатса хăварнă халăх хуçалăхне юсас ĕçе çĕршер миллиард пама, çавăнпа пĕрлех, çав вăхăтрах, тата хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене те ÿстерме, çар промышленноçне те вăйлатса пыма пултараймасть».

Совет çĕршывĕнче мирлĕ экономика пысăк хăвăртлăхпа аталаннă вăхăтра капитализмлă çĕршывсенче васкасах нумай хĕçпăшал хатĕрлеççĕ, налогсем ÿсеççĕ, ĕçсыннин массисен пурнăçĕ начарланса пырать. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче 1952—1953 финанс çулĕ валли палăртнă тÿрремĕнех çар валли каякан расходсем, иккĕмĕш тĕнче вăрçи умĕн США çав тĕллевсемпе тунă расходсемпе танлаштарсан, 65 хут пысăкрах.

Совет Союзĕн 1952 çулхи бюджечĕ капитализмлă государствăсен бюджечĕсенчен уйрăлса тăрать, пирĕн халăх миршĕн тăрăшнине, вăл коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн социализмлă Тăван çĕршывăн экономикăллă вăй-хăватне тĕреклетессишĕн çирĕп кăмăлпа пĕр ывăнмасăр кĕрешме хатĕр пулнине палăртса тăрать.

Депутат юлташсем! Бюджет комиссийĕ ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне СССР халăх хуçалăхне аталантармалли планпа пĕтĕмпех килĕштерсе тунă тесе шутлать тата ăна СССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă суммăсене çакăн пек тÿрлетÿсем кĕртсе çирĕплетме сĕнет:

Бюджет тупăшĕсене 1.092,2 миллион тенкĕ ÿстермелле:

оборотран илекен налог енĕпе 734,8 миллион тенкĕ,

усламсенчен уйăрса илекен укçа енĕпе 206,0 миллион тенкĕ,

халăхран илекен налогсем енĕпе 15,4 миллион тенкĕ,

государство заемĕсем енĕпе 100,0 миллион тенкĕ,

налоглă мар тупăшсемпе тата ытти тĕрлĕ пухăнакан укçа енĕпе 36,0 миллион тенкĕ.

Оборотран илекен налог укçине Хатĕрлев министерстви енĕпе 120,6 миллион тенкĕ, Аш-какайпа сĕт-çу промышленность министерстви енĕпе—72,2 миллион тенкĕ, Апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе—366,3 миллион тенкĕ, Çăмăл промышленность министерстви енĕпе—60,0 миллион тенкĕ, Пулă промышленность министерстви енĕпе—19,4 миллион тенкĕ, Нефть промышленность министерстви енĕпе—86,4 миллион тенкĕ, Çыхăну хатĕрĕсем тăвакан промышленность министерстви енĕпе—7,4 миллион тенкĕ тата Ялхуçалăх машиностроени министерстви енĕпе—2,5 миллион тенкĕ ÿстерме сĕнетпĕр.

Бюджета усламран уйăрса илекен укçана çакăн чухлĕ ÿстерме сĕнетпĕр: Çул-йĕр министерстви енĕпе—50 миллион тенкĕ, Хатĕрлев министерстви енĕпе—21 миллион тенкĕ, Апат-çимĕç промышленность министерстви енĕпе—15 миллион тенкĕ, Çĕр мамăк министерстви енĕпе—5 миллион тенкĕ, Суту-илÿ министерстви енĕпе 45 миллион тенкĕ, Государство страхованийĕн главнăй управленийĕ енĕпе—70 миллион тенкĕ.

Оборотран илекен налога тата усламсенчен бюджета уйăрса илекен укçана ÿстерме сĕнни туса кăларакан таварсен ассортиментне лайăхлатмалли майсене тупса палăртнинчен, таварсене ытларах вырнаçтарасси тата обложенин ставкисене улăштарасси çинчен Правительство йышăннă решенисенчен, расчетсене тĕпĕрех палăртнинчен, хатĕрлев тата апат-çимĕç министерствисен енĕпе *автотранспортпа усă курмалли коэффициента ÿстернинчен килет.*

Тупăшран илмелли, халăхран пухăнакан налогсем расчетсене тĕпрен палăртнă пирки ÿсеççĕ.

Заемсенчен илекен укçана перекет кассисем заемсем туяннă май ÿстерме палăртнă.

«Налоглă мар, тĕрлĕрен пухăнакан тупăшсем» енĕпе илмелли укçана ÿстерни, бюджетра çав тупăшсене илмелли çăлкуçсене пурне те палăртманнинчен килнĕ.

Бюджет комиссийĕ хăшпĕр ведомствăсемпе союзлă республикăсен министрĕсен совечĕсем укçа-тенкĕ хушса уйăрса пама ыйтнисене пăхса тухрĕ. Комисси çапла шутлать: укçа-тенкĕ хушса пама ыйтнисене СССР Министрĕсен Совечĕ бюджета пурнăçласа пынă вăхăтра пăхса тухма пултарать.

Бюджет комиссийĕ çĕнĕрен палăртнă тупăшсене—1.092,2 миллион тенкĕ укçана государство бюджечĕн тупăшĕсене унăн расхочĕсенчен пысăкрах тăвас ĕçе яма сĕнет.

Депутат юлташсем! Совет халăхĕн творчествăллă активлăхĕ ÿсни халăх хуçалăхĕн шалти резервĕсемпе туллирех усă курма, государство бюджетĕнчи тупăшсене пысăклатма тата расходсене чакарма анлă майсем туса парать.

1951 çулта нумай государство предприятийĕсем шалти ресурссене мобилизацилессишĕн тата продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене ирттерсе тултарассишĕн пыракан кĕрешÿре чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Хура металлурги министерстви 1951 çулта валовăй продукци туса кăлармалли плана та, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли задание те ирттерсе тултарнă. Таварлă продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетнине пула, планпа палăртнинчен 80 миллион тенкĕ ытла перекетленĕ. Днепропетровскри Петровский ячĕпе тăракан заводри рельсо-балочнăй цех коллективĕ, социализмлă ăмăртăва анлă сарса, 1951 çулта производство планне ирттерсе тултарнă, 5,1 миллион тенкĕлĕх металл, 4,3 миллион тенкĕлĕх топливо, 0,5 миллион тенкĕлĕх электроэнерги перекетленĕ, продукцин хăйне ларакан хакне планпа палăртнинчен 22,8 миллион тенкĕлĕх йÿнетнĕ.

Анчах та, калас пулать, Хура металлурги министерстви 1951 çулта хуçалăхри резервсемпе усă курман, продукцин хăйне ларакан планлă хакне чылай ÿстернĕ.

Хăшпĕр министерствăсем, производство планĕсене тултарнине кăтартакан вăтам хисепсемпе лăпланса, уйрăм предприятисем кая юлнипе, вĕсем плана йышăннă номенклатура тата ассортимент тăрăх тултарса пыманнипе килĕшсе тăнă. Плана тултарни халăх хуçалăхне кирлĕ продукци çителĕклĕ парса тăтăр, государствăпа çавăн пек плана тултарни кăна кирлĕ.

Тĕслĕхрен, Строительство материалĕсен промышленность министерствине илер. Асăннă министерствăн предприятийĕсем 1951 çулта валовăй продукци туса кăлармалли плана 102,1 процент тултарнă. Анчах та союзлă министерствăна пăхăнса тăракан предприятисенчен виççĕ пайĕран пĕр пайĕ хăйсен производство планĕсене тултарайман. Иртнĕ çулта цемент, кирпĕч, черепица тата строительствăра усă курмалли хурансем туса кăлармалли плана тултарман.

Автомобильпе трактор промышленноçĕн министерствин предприятийĕсем çулталăк планне, пĕтĕмĕшпе илсен, тултарнă. Çав вăхăтрах хăшпĕр заводсем валовăй продукци туса кăлармалли плана тата производство планне йышăннă номенклатура тăрăх тултарман.

Производствăри тăкаксене чакармалли резервсем автотранспортпа усă курас ĕçре уйрăмах пысăк. Пирĕн çĕршывра автомобильсен хисепĕ çултан-çул ÿсет. Автомобильсемпе грузсем турттарасси 1951 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 20 процент ÿснĕ. Автотранспортпа лайăхрах усă курни тата грузсене автотранспортпа турттармалли хака йÿнетни хальхи вăхăтра уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

СССР Министрĕсен Совечĕ 1950 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă постановленипе Мускавра кирпĕчсене автомобильсемпе турттарас ĕçе пĕр организаци урлă туса пымалла тунă. Çак мероприяти усăллă пулни 1951 çултах питĕ аван курăнчĕ. Кирпĕчсене çавнашкал майпа турттарас ĕçе 1952 çулта Россия Федерацийĕн пур хулисенче те, çавăн пекех Украинăра та йĕркелеççĕ.

Кирпĕчсене çавнашкал меслетпе турттарас ĕçĕн опычĕ ытти массăллă грузсене турттарас ĕçе те çитес çывăх вăхăтрах куçараççĕ. Ку мероприяти çакна пĕлтерет: заводсене, фабрикăсене, база склачĕсене грузсем тиеме грузсем илекен организацисем хăйсен автомашинисене ямаççĕ, грузсем тăратакан организацисем хăйсемех ятарласа тунă автотранспорт организацисем урлă çав грузсене илекенсем патне çитереççĕ. Çакăн пек меслетпе ĕçлесен потребительсен грузсем турттарнă чухне автомобильсемпе рабочисем ĕççĕр тăнине пула тăкаксем тÿсесси пулмасть, промышленность предприятийĕсене, строительство тата суту-илÿ организацисене грузсем турттарса парас ĕç йĕркеллĕрех пулса пырать.

Грузсем турттарас ĕçе пĕр организаци урлă туса пыни хакла ларакан автомобильсен «карлика» хуçалăхĕсене пĕтерме май парĕ. Çавăн пек автомобильсен пĕчĕк хуçалăхĕсем пирĕн çĕршывра чылай-ха. Сăмахран, Çул-йĕр министерствин пĕр автохуçалăхĕнче, вăтам шутпа, пиллĕке яхăн грузовой автомобиль шутланать, Çăмăл промышленность министерствинче—улттă яхăн, Апат-çимĕç промышленность министерствинче — çиччĕ яхăн автомобиль шутланать. Çул-йĕр министерствин Мускав хулинче кăна 447 автомобиль хуçалăхĕ, Апат-çимĕç промышленность министерствин—298, Суту-илÿ министерствин 372 автомобиль хуçалăхĕ пур. Асăннă автомобиль хуçалăхĕсен 67 процентĕнче 1—2 автомобиль кăна шутланать.

Грузсене турттарас ĕçе пĕр организаци урлă туса пыни халăх хуçалăхĕнче пысăк усă кÿнине шута илсе, вăл меслетпе пур çĕрте те, чи малтан пысăк хуласемпе промышленноçлă центрсенче анлăн усă курмалла. Çакă вăл автотранспортпа усă курас ĕçе йĕркелеме пулăшать, унăн тухăçлăхне ÿстерет, грузсем турттармалли хака йÿнетет, продукци тăратакан организацисен ĕçне лайăхрах йĕркелеме тата предприятисемпе стройкăсене продукци вăхăтра кÿрсе тăрас ĕçре вĕсен ответлăхне ÿстерме май парать. Госпланăн тата СССР Финанс министерствин автомобиль транспорчĕпе усă курас ĕçре тивĕçлĕ йĕркелĕх тума тата çав хуçалăха тытса тăрас ĕçри расходсене чакарма Правительство умне ыйту лартмалла.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви вăрман промышленноçне аталантарса пырассишĕн тимлĕ тăрăшаççĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисене çĕнĕ техникăпа пуянлатнă, ĕçшĕн тÿлессине çĕнĕлле йĕркеленĕ, вăл ĕç нормисене тултарма тата ирттерсе тултарма май парать.

Анчах та вăрман промышленноçĕнче производство ĕçне лайăхлатма туса панă паха майсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ. Вăрман промышленноçĕ темиçе çул хушши ĕнтĕ производство планĕсене тултарса пымасть. 1951 çулта вăл промышленноçăн государство умĕнче парăма кĕнĕ пĕртен-пĕр отраслĕ пулса тăчĕ, плана 6 процент таран тултарса çитереймерĕ. 1952 çулхи январĕн пĕрремĕшĕ тĕлне касса хатĕрленĕ йывăçа турттарса кăлараманнин хисепĕ нормăпа пăхнинчен чылай ытларах шутланнă.

Вăрман касса хатĕрлессипе турттарас енĕпе плана тултарманнин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри—транспортпа тата механизмпа çителĕклĕ усă курманни пулать. 1951 çулта чылай вăрманпромхозсенче

(Малалли 4-мĕш страницăра.).

СССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕЧӖН ЛАРӐВӖСЕМ

ССР Союзӗн 1952 çулхи Государство бюджечӗ тата ССР Союзӗн 1950 çулхи Государство бюджетне пурнӑçлани çинчен

Союз Совечӗн Бюджет комиссийӗн Председателӗ Л. Р. Корниец депутат тунӑ доклад

(Малалли. Пуçламӑшӗ 3 стр.).

тракторсем, касна йывӑçа çул хӗррине сӗтӗрсе кӑларакан лебедкӑсем, йывӑç турттармалли машинӑсем тата ытти механизмсем час-часах ӗçлемесӗр тӑнӑ, ӗç тухӑçлӑхне тӗрӗс йӗркелессишӗн тата ӗç тухӑçлӑхне ӳстерессишӗн çине тӑрса кӗрешмен.

Вӑрманпромхозсенче рабочисене вӑрман хатӗрлев ӗçре ӗçлеттерес вырӑнне тӗрлӗрен хушма хуçалӑхӗсенче тата ытти çавнашкал ӗçсене ӗçлеттернӗ. 1951 çулхи тӑваттӑмӗш кварталта вӑрманта ӗçлекен мӗнпур рабочисенчен 56 процентӗ кӑна, иккӗмӗш кварталта—36 проценчӗ, виççӗмӗш кварталта—35 проценчӗ, тӑваттӑмӗш кварталта—43 проценчӗ кӑна тӗп ӗçре ӗçленӗ.

Производство программисене тултарман пирки, ӗç укçи фондне ытлашши расходланӑ пирки тата усӑсӑр тӑкаксем тунӑ пирки 1951 çулта Вӑрман промышленноçӗ министерстви енӗпе пӗр кубометр йывӑç касса хатӗрлесе ӗçӗн хакӗ плана пӑхнинчен 9 процент ытла ӳснӗ, чылай вӑрман трестӗсемпе вӑрманпромхозӗсем хӑйсен отчетлӑ çулӗсене убыткӑпа вӗçленӗ.

Вӑрман промышленноçӗнче пысӑк тухӑçлӑ ӗçлекен, техникӑпа пӗлсе усӑ куракан, плана тултарассишӗн ӑнӑçлӑ кӗрешекен стахановецсемпе вӑрман хатӗрлекен предприятисен коллективӗсем сахал мар. Малта пыракансен опытне анлӑн сарни вӑрман промышленноçӗнче ӗç тухӑçлӑхне ӳстермелли пысӑк резерв пулса тӑрать.

«Вятлесляс» трестӗнчи малта пыракан механизаторсем—Бусыгин, Потапов, Бердников юлташсем вӑрман хатӗрлевӗнче механизмсене анлӑрах усӑ курассишӗн, çавна май ӗç тухӑçлӑхне ӳстерессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту пуçарнине пурте пӗлеççӗ. «Закарпатлеспром» трестӗн Усть-Чернянск вӑрманпромхозӗнчи автоçул çинче ӗçлекен машинист Дорошенко юлташ, сӑртлӑ вырӑнсенче ӗçлесе те, производство нормине кулленех 185—200 процент тултарать, çунтармалли тата сӗрмелли материалсене нумай перекетлет. «Свердлес» трестӗн Алтынайри вӑрманпромхозӗ, ӗçе сехет графикӗ тӑрӑх йӗркелесе, тракторсене çине тӑнмелли вӑхӑта чакарас, çав вӑхӑтрах тракторсем çӳремелли хӑвартлӑхне ӳстерес, йывӑçа çывӑхран турттарса кӑлармалла тӑвас тӗлӗшпе стахановецсем панӑ пахха сӗнӳсене пурнӑçланипе йывӑç хатӗрлессинче ӗç тухӑçлӑхне пӗр хут çурӑ ытла ӳстернӗ. 1951 çулхи 9 уйӑх хушшинче 1.400 пин тенкӗлӗх перекетлӗх тунӑ.

Çакна палӑртмалла: вӑрман промышленноçӗн чылай предприяти руководителӗсем хӑйсен предприятийӗсене ытти предприятисен малта пыракансен пуçарӑвӗсене питӗ вӑрахӑн кусараççӗ.

Вӑрман промышленноçӗ работникӗсен, вырӑнти организацисем пулӑшнипе, вӑрман промышленноçӗн кая юлса пынине пӗтермелле, 1952 çулта çӗршыва кирлӗ чухлӗ вӑрман хатӗрлесе памалла.

Социализмлӑ экономика хӑватлӑн ӳссе пынӑ никӗс çинче хулара тата ялта тавар çавраçӑвӗ çултан-çул вӑйланса пырать. Юлашки çулсенче магазинсемпе лавкасен шутне ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк ӗçсем туса ирттернӗ. Суту-илӳ учрежденийӗсен чылайӑшӗ лайӑххӑн ӗçлеме, ӗççыннисен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене ытларах тивӗçтерме пуçларӗç.

Анчах та нумай суту-илӳ организацийӗсен ӗçӗнче пысӑк çитменлӗхсем пур. Чылай суту-илӳ организацисем 1951 çулта ваккӑн сутмалли тавар çавраçӑвӗн планне пӗтӗмӗшпе тултараймарӗç, çав вӑхӑтрах вӗсен складсенче выртакан тавар хисепӗ плана пӑхнинчен нумай пысӑкрах пулнӑ. Çакӑ вӑл, пӗр енчен, ваккӑн суту-илӳ тӑвакан организацисене тавар валеçсе парас ӗçре тӗрӗс планламаннинчен килет. Тӗслӗхрен çакӑн пек факт илсе кӑтартма пулать. Рязаньри облторгӑн Лебединск отделенине 1950 çулӑн пуçламӑшӗнче икӗ вагон трубасӑр лампӑсем кӳрсе килнӗ. Ряжск отделенине вара лампа трубисене нумай кӳрсе килнӗ. Çавӑн пек «планлани» пула çак трубасемпе лампӑсем халӗ те кайман таварсен хисепӗнче выртса тӑраççӗ.

Обществӑллӑ апатлану организацийӗсен ӗçӗнче те çитменлӗхсем сахал мар. Вӑрçӑчченхи вӑхӑтпа танлаштарсан, столовӑйсен, ресторансен, кафе тата закусочнӑйсен хисепӗ чылай ӳснӗ пулсан та, вӗсем çителӗксӗр-ха, уйрӑмах çӗнӗ промышленноçӑ районӗсенче, пысӑк промышленноçлӑ хуласенче тата административлӑ центрсенче вӗсем çителӗксӗр. Хӑшпӗр хуласенче обществӑллӑ апатлану предприятийӗсене вырӑнти уйрӑмлӑхсене шута илмесӗр аталантараççӗ. Час-часах хула хӗррисенче, рабочи поселоксенче столовӑйсемпе чайнӑйсем тата закусочнӑйсем çителӗклӗ пулмаççӗ. Чылай чухне хатӗрленӗ апат-çимӗç пахалӑхӗ тата обществӑллӑ апатлану предприятийӗсенче ӗçлекенсен культурӑллӑхӗ ӗççыннисене тивӗçтермест, ассортимент минимумне пурнӑçламаççӗ.

Суту-илӳ министерстви правительство суту-илӳ предприятисем тума уйӑрса паракан укçа-тенкӗпе çителӗклӗ таран анлӑн усӑ кураймасть. Горький хулинче темиçе çул хушши çӗнӗ универмаг тӑваççӗ, анчах та çак тарана çитсе те планпа пӑхнӑ ӗçсене 32 процент кӑна пурнӑçланӑ. Мускав облаçӗнчи Марфино ялӗнче 1944 çултанпа, çӗнӗ тӗпленӗпа парнии комбиначӗ тӑваççӗ. Нежин хулинче 1946 çултах тӑвармалла пункт тума тытӑннӑ, çак строительствӑн планне 1952 çулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне 28 процент таран кӑна тултарнӑ.

Суту-илӳ министерствин финанс ӗçӗнче те пысӑк çитменлӗхсем пур. Чылай суту-илӳ организацийӗсем, хуçасӑрлӑха пула, 1951 çулта пысӑк тӑкаксем тунӑ, накопления тумалли плана тултарман, укçалӑх çулне убыткӑпа вӗçленӗ.

Суту-илӳ министерствин, çавӑн пекех Центросоюзӑн тата вӗсен вырӑнсенчи органӗсен хӑйсен ӗçӗнчи çитменлӗхсене пӗтермелле, ваккӑн суту-илӳ тӑвакан организацисем валли ӗççыннисем мӗнле тавар ыйтнине тӗпчесе, çӑнаса пӗлмесӗр уйӑрса, кӳрсе парас йӗркене пӑрахӑçа кӑлармалла, таварсене материаллӑ пурлӑхсене мӗнле усранине, государствӑн коопераци укçи-тенкине тӗрӗс те перекетлӗн расходланине тӗрӗслесе пымалла.

Депутат юлташсем! ССР Союзӗн государство бюджечӗпе союзлӑ республикӑсен бюджечӗсене пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраççӗ. Союзлӑ республикӑсенчен чылайӑшӗ 1951 çулта бюджета ӑнӑçлӑн пурнӑçларӗç. Бюджета тупӑшсем енӗпе те, расходсем енӗпе те Украина ССР-ӗ, Грузи ССР-ӗ, Латви ССР-ӗ, Армян ССР-ӗ тата Эстони ССР-ӗ уйрӑмах ӑнӑçлӑ пурнӑçланӑ.

Çав вӑхӑтрах уйрӑм республикӑсем иртнӗ çулта хӑйсен финанс задачисене пурнӑçа кӗртеймерӗç. Узбек ССР-ӗ халӑха вӗрентес ӗçе 77 миллион тенкӗлӗх, Казах ССР-ӗ—78 миллион тенкӗ ытларах усӑ курман. Белорус ССР-ӗ те 1951 çулхи бюджета тупӑшсем енӗпе те, расходсем енӗпе те çителӗксӗр пурнӑçланӑ.

СССР Финанс министерстви 1951 çулта бюджета пурнӑçлас тӗлӗшпе чылай лайӑх ӗçлерӗ, çавна май государство бюджетне тупӑшсем енӗпе ирттерсе тултарнӑ. Çавӑнпа пӗрлех СССР Финанс министерствин ӗçӗнче çитменлӗхсем те пур. Хӑшпӗр республикӑсемпе облаçсем, халӑхран налог пухмалли пӗтӗмӗшле плана тултарнӑ вӑхӑтрах, ялхуçалӑх налогӗ пухмалли ӗçе палӑртнӑ срокченех туса çитереймерӗç.

Финанс министерстви унӑн вырӑнсенчи органӗсем предприятисемпе, учрежденисем тата организацисем штат дисциплинине мӗнле пурнӑçласа пынине çителӗксӗр тӗрӗслеççӗ. 1951 çулта Нефть промышленноçӗн министерствин 17 предприятийӗнче тӗрӗсленӗ хыççӑн административлӑ управлени аппаратӗнче 183 çынна штатран ытла ӗçе илнине палӑртнӑ. Вӗсене ӗç укçи тӳлесе пӗр миллион тенкӗ ытла расходланӑ. Штат дисциплинине çавнашкал пӑснисем Машиностроени тата приборостроени министерствин, Автомобильпе трактор промышленноçӗн министерствин предприятийӗсенче те пулнӑ.

СССР Финанс министерствипе унӑн вырӑнти органӗсем бюджетри учрежденисен финанс хуçалӑхӗсене тивӗçлӗ йӗркелӗх туса çитерейменех-ха. Хӑшпӗр бюджет учрежденисенче шыраса илмелли парӑмсем тата материалсен запасӗ ытлашши ӳссе кайнӑ.

Депутат юлташсем! Бюджет комиссийӗ çавӑн пекех тата 1950 çулхи государство бюджетне мӗнле тултарни çинчен калакан отчета та пӑхса тухрӗ. СССР Министрӗсен Совечӗ тӑратнӑ СССР 1952 çулхи государство бюджетне пурнӑçлани çинчен калакан отчетӗнче нимӗн улӑштармасӑр, çавӑн пек хисепсене çирӗплетме сӗнет: тупӑшсем енӗпе—422.767.710 пин тенкӗ, расходсем енӗпе—413.236.606 пин тенкӗ, тупӑшсем расходсенчен 9.531.104 пин тенкӗ пысӑкрах.

Депутат юлташсем! Пирӗн социализмлӑ хуçалӑхӑн производство ӗçне лайӑххӑн организацилеме, ӗç тухӑçлӑхне малалла ӳстерме, бюджетӑн тупӑш пайне ӳстерсе пыма пысӑк майсем пур. СССР Союзӗн 1952 çулхи государство бюджетне тултарма çес мар, ирттерсе тултарма пулать. Пур резервсене те тупса усӑ курни бюджета пурнӑçлас ӗçри йывӑрлӑхсене çӗнсе илмелли май пулса тӑрать.

1952 çулхи халӑх хуçалӑхӗн планне тата государство бюджетне ӑнӑçлӑн тултарни коммунизм строительствинче тата малтан пӗрешке ӗçре совет халӑхӗ тунӑ çӗнтерӳ пулса тӑрӗ.

Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, пирӗн аслӑ çулпуçӑмӑр тата учителӗмӗр Сталин юлташ ертсе пынипе совет халӑхӗ коммунизм строительствинче, хамӑран юратнӑ Тӑван çӗршывӑн хӑватне çирӗплетес ӗçре çӗнӗ пысӑк çӗнтерӳсем тӑвӗ. (Нумайччен алӑ çупаççӗ).

СССР Финанс министрӗ А. Г. ЗВЕРЕВ юлашкинчен тухса калани

Депутат юлташсем! Верховнӑй Советра çирӗплетме СССР Министрӗсен Совечӗ тӑратнӑ СССР Союзӗн 1952 çулхи Государство бюджетне тата 1950 çулхи бюджета пурнӑçлани çинчен тӑратнӑ отчета Союз Советӗнче тӗплӗ сӳтсе явнӑ. Совет государствин бюджечӗ, ӑна депутатсем пурте пӗр шухӑшлӑ пулса ырларӗç, халӑх хуçалӑхне малалла хӑватлӑн аталантарса пыма, Совет Союзӗнчи халӑхсен пурнӑçне пӗрмай лайӑхлатса тата культурине ӳстерсе пыма укçа-тенкӗ çителӗклӗ парса тӑрать.

ССР Союзӗн 1952 çулхи Государство бюджечӗ—пирӗн Тӑван çӗршывӑн мирлӗ хуçалӑх строительстви бюджечӗ тата культурӑна чечеклентермелли бюджет пулса тӑрать, вӑл коммунизм тума аслӑ Сталин кӑтартса панӑ пысӑкран та пысӑк программӑна пурнӑçлассишӗн пӗтӗм вӑй-хӑвата парса кӗрешекен мӗнпур совет халӑхӗн интересӗсене палӑртса тӑрать.

Союз Совечӗн Бюджет комиссийӗ, 1952 çулхи бюджета пӑхса тухса, оборотран илекен налога 734.800 пин тенкӗ, усламран илекен укçана—206 миллион тенкӗ, халӑхран пухакан налога—15.400 пин тенкӗ, перекет кассисем илекен государство заемӗсем—100 миллион тенкӗ, сборсемпе тӗрлӗ тупӑшсем—36 миллион тенкӗ, пӗтӗмпе 1.092 200.000 тенкӗ ӳстерме, çак суммӑна 1952 çулхи бюджетра тупӑшсене расходсенчен ӳстермелле тӑвас тесе сӗнӳ панӑ.

Министрсен Совечӗ çак сӗнӳсене пӑхса тухрӗ тата Союз Советне çапла пӗлтерме хушрӗ: СССР Правительстви Бюджет комиссийӗн сӗнӗвӗсемпе килӗшет.

Бюджет çинчен сӳтсе явнӑ чухне депутатсем хӑйсен сӑмахӗсенче уйрӑм министерствӑсемпе ведомствӑсен çитменлӗхӗсене кӑтартса пачӗç. Министерствӑсен депутатсем кӑтартса панине шута илмелле тата ӗçри çитменлӗхсене пӗтермелле.

СССР Министрӗсен Совечӗ депутатсем кӑларса тӑратнӑ ыйтусене пӑхса тухать тата вӗсем тӑрӑх тивӗçлӗ решенисем йышӑнать, çавӑн пекех уйрӑм министерствӑсен ӗçне лайӑхлатма мерӑсем йышӑнать.

Тимашова депутат РСФСР-ӑн Сутӗç министерстви шкул строительстви çине кирлӗ пек пӑхмасть, Сывлӑх министерстви Воронеж облаçӗнче сывлӑха сыхлас ӗçе лайӑхлатма çителӗклӗ пулӑшмасть, терӗ. Çак ыйтӑва РСФСР Министрӗсен Совечӗн пӑхса тухмалла та тивӗçлӗ мерӑсем йышӑнмалла.

Хӑшпӗр депутатсем хуçалӑхӑн уйрӑм отраслисене аталантарма тӗрле ӗçсем тума кирли çинчен ыйту кӑларса тӑратрӗç. Çав ыйтусене пурне те шута илмелле тата вӗсене халӑх хуçалӑх планне пӑхса тухнипе пӗр вӑхӑтра татса памалла, ун чухне депутатсем хӑйсен сӑмахӗсенче тапратнӑ ӗçсене пурнӑçлама финанспа материалсен ресурсӗсене шута илмелле.

Клещев депутат СССР Госпланне Белорус ССР-ӗнче торф кӑларассине пысӑклатма сӗнӳсем хатӗрлеме хушма тата Центропромсовета республикӑра куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан производствӑна анлӑлатма производство каяшӗсене валеçес ӗçе тепӗр хут пӑхса тухма хушма ыйтрӗ. Клещев депутат кӑларса тӑратнӑ ыйтусене Белорус ССР Министрӗсен Совечӗн пӑхса тухса, вырӑнти промышленность тата промысла коопераци предприятийӗсенче кулленх кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларма мерӑсем йышӑнмалла. Центропромсоветӑн республикӑри промкоопераципе аталантарма пулӑшмалла. Белорус ССР-ӗнче торф кӑларассине ӳстерес ыйтӑва та Белорус ССР Министрӗсен Советӗнче пӑхса тухмалла. Ку ыйту тӑрӑх унӑн решени йышӑнмалла, кирлӗ пулсан, ССР Союзӗн Министрӗсен Советне конкретлӑ сӗнӳсем тӑратмалла.

Корниец депутат СССР Финанс министерстви тата унӑн вырӑнти органӗсем халӑхран налог пухас ӗçре пысӑк çитменлӗхсем тунине, штат дисциплинине пурнӑçланине тӗрӗслессине вӑйлатма палӑртрӗ. СССР Финанс министерстви налог енӗпе ӗçлессине лайӑхлатма мерӑсем йышӑнать. Унпа пӗрлех союзлӑ тата автономиллӗ республикӑсен министрӗсен совечӗсен те, ӗççынни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсен те харпӑр хӑй республикисемпе облаçӗсенче налог пухмалли плансене вӑхӑтра тултарас тесе ытларах тӑрӑшса ӗçлемелле.

Депутат юлташсем!

ССР Союзӗн 1952 çулхи Государство бюджетне ӑнӑçлӑ тултарас тесен, предприятисемпе организацисен тата учрежденисен руководителӗсен тӳлевсем енӗпе бюджет умӗнчи хӑйсен мӗнпур обязательствисене пӗтӗмпех пурнӑçламалла тата финанспа бюджет дисциплинине çирӗп пӑхӑнмалла. Кашни предприятипе хуçалӑх организацийӗн руководителӗн финанс ыйтӑвӗпе тарӑнӑн интересленмелле, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетме, усӑсӑр пулакан тӑкаксене пӗтерме, тупӑш илмелли плана тултарма тата ирттерсе тултарма куллен-кун çӗнӗ майсем тупмалла.

Хуçалӑх расчетне малалла çирӗплетес тата предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалӑх ӗçне тӗрӗслесе тӑрассине вӑйлатас тӗлӗшпе финанс органӗсемпе банксем пысӑк вырӑн йышӑнма тивӗç: вӗсен предприятисен, организацисен тата учрежденисен финанспа хуçалӑх ӗçне укçапа тӗрӗслесе тӑрассине вӑйлатмалла, бюджет валли тупӑшсем вӑхӑтра панине тата бюджетран паракан укçа-тенкӗпе тӗрӗс усӑ курнине тӗрӗслемелле.

ССР Союзӗн 1952 çулхи Государство бюджечӗ совет халӑхӗ хӑйӗн вӑй-хӑватне иксӗлми ӗненсе тӑнине тата вӑл совет халӑхӗ большевиксен партийӗ, Совет правительстви, пирӗн юратнӑ çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе хамӑр çӗршывра коммунизм обществи тӑвас ӗçре çӗнӗрен те çӗнӗ çитӗнӳсемшӗн кӗрешнине кӑтартса парать. (Нумайччен алӑ çупаççӗ).

Хамӑр республика тӑрӑх

Вӑрман турттармалли плана срокчен тултарассишӗн Çарӑклӑри автоçул çинче ӗçлекен кашни шофер социализмлӑ ӑмӑртӑва тухнӑ.

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: автоçул çинче ӗçлекен чи лайӑх шоферсенчен пӗри И. И. Иванов юлташ. Вӑл кӑçалхи сезон планне февралӗн 12-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Мартӑн 16-мӗшӗнче „Чӑваш Коммуни" хаçат парнисене илмелли ӑмӑрту пулать

Хӗллехи спорт сезонӗ вӗçленнӗ ятпа кашни çул ирттерекен массӑллӑ спорт ӑмӑртӑвӗ—йӗлтӗрçӗсен «Чӑваш Коммуни» хаçатӑн куçса çӳрекен парнисене илмелли эстафетӑллӑ ӑмӑртӑвӗ çитес вырсарникун, мартӑн 16-мӗшӗнче, пулать. Организациллӗ комитет ӑмӑртӑва Чӑвашсен ялхуçалӑх институчӗ сывӑхӗнче (Шупашкартан Етӗрнене каякан çул тӑрӑх) ирттерме йышӑннӑ.

«Чӑваш Коммуни» хаçатӑн куçса çӳрекен парнисене илмелли ӑмӑртӑва кӑçал та, иртнӗ çулсенчи пекех, 6 ушкӑн тӑрӑх ирттереççӗ. 1-мӗш ушкӑнпа ирӗклӗ спорт обществисемпе аслӑ шкулсен командисем, 2-мӗш ушкӑна вырӑнсенчи физкультура коллективӗсен йӗлтӗрçисем, 3-мӗш ушкӑна çитӗннӗ арçын ачасем, 4-мӗш ушкӑна хӗрсем, 5-мӗш ушкӑна арçын ачасем тата 6-мӗш ушкӑна хӗрачасем кӗреççӗ.

Йӗлтӗрçӗсем эстафетӑллӑ ӑмӑртӑвӗнче мала тухнӑ командӑсене «Чӑваш Коммуни» хаçатӑн куçса çӳрекен парнисене параççӗ.

Вӑрманпромхозӑн çӗнӗ клубӗнче

Приволжски вӑрманпромхозӑн пӗлтӗр çӗнӗ клуб ӗçлеме пуçларӗ.

Клуб культурӑллӑ-массӑллӑ ӗçӗн центрӗ пулса тӑчӗ. Унта драма тата хор кружокӗсем ӗçлеççӗ. Драма кружокӗ Щеглов çырнӑ «Мастерсем» пьесӑна, А. П. Чеховӑн «Предложение» тата ытти пьесӑсене те лартса пачӗ. Кружок членӗсем çав спектакльсене Лебедински, Кугуяры вӑрман участокӗнче ӗçлекенсене те кӑтартнӑ. Çамрӑк рабочисем художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсене активлӑ хутшӑнаççӗ. Уйрӑмах В. Тимченко шофера, А. Мухоморов моториста тата ытти рабочисене те палӑртмалла.

Вӑрманпромхоз правленийӗ клуб валли купӑс, гитарӑпа балалайка, 3 мандолина тата ытти музыка инструменчӗсем илсе панӑ. Музыка инструменчӗсемсӗр пуçне клубра шашка-шахмат, домино, бильярд пур. Темиçе тӗрлӗ хаçат-журнал килсе тӑрать.

Клуб çумӗнче библиотека ӗçлет. Унта пин кӗнеке ытла.

Лекцисемпе докладсем ирттерес ӗçе аван йӗркеленӗ. Юлашки вӑхӑтра «Тӗнчери лару-тӑру», «Корейӑри вӑрçӑ», «Совет çынни сӑн-сӑпачӗ» тата ытти темӑсем тӑрӑх лекцисем пулнӑ.

Клуб çумӗнче «Лесовоз» ятлӑ стена хаçачӗ тухса тӑрать. Унта вӑрман хатӗрлевӗнче малта пыракансен ӗç опытне анлӑ сутатаççӗ, кая юлса пыракансене критикӑлаççӗ.

Хӗрӳ ӗç хыççӑн рабочисем каçхине клуба пухӑнаççӗ. Унта вӑхӑта культурӑллӑ ирттерме пур условисем те туса панӑ.

Клубри культурӑллӑ-массӑллӑ ӗçе лайӑх йӗркелени вӑрманпромхозри рабочисен ӗç тухӑçлӑхне ӳстерме нумай пулӑшать.

А. СЕРГЕЕВ.

Колхозсенчен пӗлтереççӗ

МУРКАШ. Сталин ячӗпе тӑракан ялхуçалӑх артелӗ кӑçал ӗнесем тата пӑрусемпе сыснасем валли типовӑй витесем тума, чӑх-чӗп витине тӗпрен юсама, фермӑра ӗçлекенсем валли общежити лартма палӑртнӑ. Çавӑн пекех ялхуçалӑх машинисене лартма склад тата гараж, кӗпер тумалла.

Колхоз членӗсем строительство валли кирлӗ йывӑçа хатӗрлеççӗ. Çак кунсенче пин фестметр йывӑç каснӑ. Ӑна çуна çулӗ пӑсӑличчен турттарса кӑлараççӗ.

И. КОСТИН.

СӖНТӖР. «Заря» колхозри Н. Михеев конюх пӗлтӗр хӑйне çирӗплетсе панӑ 20 тихана пурне те сывӑ пӑхса ӳстернӗ. Ытти конюхсем те лайӑх ӗçлеççӗ. Артель лаша ӗрчетмелли плана ирттерсе тултарнӑ.

Колхоз правленийӗ Н. Михеев юлташа ӗçшӗн хушса тӳлемелли йӗркепе 300 килограмм тырӑ памалла тунӑ. Ытти конюхсене те ӗçшӗн хушса тӳленӗ.

В. ЧЕРНОВ.

„Ялав" журналӑн çӗнӗ номерӗ

Чӑваш совет писателӗсен союзӗ кӑларакан «Ялав» журналӑн кӑçалхи пӗррсмӗш номерӗ пичетленсе тухрӗ.

Журналта А. М. Коллонтайӑн «Ленин Смольнӑйра» ятлӑ асаилӗвӗсене пичетленӗ, А. Артемьевӑн «Чаплӑ хушамат» ятлӑ новеллине, К. Пайрашӑн «Чӗри лайӑх» ятлӑ пьесӑн малтанхи пайӗсене, В. Садайӑн «Ватӑлмалӑх кунра», В. Ухлин «Пуйӑшрӗç» ятлӑ калавӗсене, А. Эсхелӗн «Хӗл илемӗ» ятлӑ очеркне кӗртнӗ. Журналта çак сӑвӑсем пур: Чӑваш халӑх поэчӗ Яков Ухсай—«Пирӗн ӗмӗр çулӗ», И. Малгай — «Ленин пурӑнать», «Çӗнӗ çул», П. Торопей—«Асран каймн сӑн», М. Захаров—«Çӗнӗ ГЭС», А. Иванов — «Пирӗн ӗлка», В. Алендей—«Каçхи шухӑш-кӑмӑлсем». Çавӑн пекех П. Григорьевӑн «Çуллахи кунсем» повеçӗ, Я. Ухсайӑн «Вырӑс ачи» поэми çинчен вулакансем çырнӑ статьясене пичетленӗ.

Журналта республика пурнӑçне кӑтартакан фотоӳкерчӗксем нумай.

Квартал планне тултарнӑ

СӖНТӖР. Мӑн Хураçка ял Совечӗ кашни кварталтах укçа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе районта малта пырать. Ял Совечӗ (председателӗ Леймов юлташ) 1952 çулхи I-мӗш кварталти укçа-тенкӗ пухмалли плана февралӗн 28-мӗшӗ тӗлне 102 процент тултарчӗ.

Кварталти финанс планне çавӑн пекех Пушкӑрт тата Кӑпас ял Совечӗсем те тултарчӗç.

С. НАЛИМОВ.

Суккӑрсем вӗренеççӗ

КАНАШ. Районти суккӑрсен обществи тӑрӑшнипе кӑçал Катек ялӗнче суккӑрсем валли ятарласа шкул уçрӗç. Шкула суккӑрсен обществин членӗ Храмов юлташ ертсе пырать. Унта пурӗ вунӑ çын вӗренет. Вӗренекенсем хӑйсем тӗллӗн çырма тата вулама вӗренсе çитрӗç.

В. ЕРМОЛАЕВ.

Тӳрлетни

«Чӑваш Коммуни» хаçатӑн 41-мӗш номерӗнче пичетленнӗ «Чӑваш АССР ялхуçалӑхне малалла аталантармалли задачӑсем çинчен» ятлӑ статьяра (2-мӗш страница, 6-мӗш колонка) çӳлтен 4-мӗш абзацри иккӗмӗш предложени пуçламӑшне çапла тӳрлетсе вуламалла: «Устав тӑрӑх, колхоз председателӗ уйӑхра икӗ хутран кая мар правлени ларӑвне пухма тивӗçлӗ».

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Корейӑри ӗçсем

ХАЛӐХ ÇАРӖН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартӑн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх çарӗн главнӑй командованийӗн паянхи пӗлтерӗвӗнче çапла каланӑ: Халӑх çарӗн чаçӗсем Китай халӑх добровольцӗсен отрячӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗç оборонӑра тӑрса çапӑçаççӗ.

Мартӑн 7-мӗшӗпе 8-мӗшӗнче фронтӑн уйрӑм участокӗсенче тӑшман хӑшпӗр çӗрте атакӑсем тума хӑтланнӑ. Халӑх çарӗн чаçӗсем тӑшман атакисене ӑнӑçлӑ сире-сире янӑ, тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтернӗ.

Паян самолетсене хирӗç çапӑçакан салтаксем тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ.

ПХЕНЬЯН, мартӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх çарӗн главнӑй командованийӗ паян çапла пӗлтернӗ: Корея Халӑх çарӗн соединенийӗсем Китай халӑх добровольцӗсен чаçӗсемпе пӗрле тӑшмана хирӗç халиччен хи вырӑнсенчех оборонӑра тӑрса çапӑçаççӗ.

БРАЗИЛИРЕ ЧУГУН ÇУЛ ПОЕЗЧӖСЕМ АРКАННА

МОНТЕВИДЕО, мартӑн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Уругвайри хаçатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, мартӑн 4-мӗшӗнче Бразилире Анчиета станцийӗ (Рио-де-Жанейроран 40 километрта) патӗнче икӗ поезд пӗр пӗринпе çапӑнса арканнӑ. Çавӑн чухне 119 çын вилнӗ, 250 çын аманнӑ. Бразилире чугун çул çинчи поездсем арканасси час-часах пулать, мӗншӗн тесен Бразили правительстви чугун çул транспортне лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть.

Трюгве Ли Грецири палачсене хӳтӗлет

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗрлешнӗ Нацисен организацийӗнчи журналистсем çакна палӑртаççӗ: Афинӑри суд мартӑн 1-мӗшӗнче йышӑннӑ приговор тӑрӑх вӗлермелле тунӑ Греци патриочӗсен телеграммисене, çав телеграммӑсене государствӑсен ООН çумӗнчи официальнӑй представителӗсем Генеральнӑй Ассамблея председательне Нерво господина тата ООН Секретариатне çав документсене Организаци мӗнпур членӗсене ярса пама ыйтнӑ çырусемпе пӗрле панӑ пулин те, вӗсене ООН членӗсене халӗ те ярса паман. Журналистсем хушшинче çак факта уйрӑм сыхсем Грецири реакцин ирсӗр ӗçӗсене тӗнчери общественноçран пытарма хӑтланни вырӑнне хурса хаклаççӗ. Çакна тӳррӗнех кӑтартса параççӗ: Грецири политикӑллӑ террор асаплантаракан çынсене хӳтӗлеме ыйтнӑ çырусене Трюгве Ли законсӑр ӗçсем тунине пула халиччен те ООН членӗсене ярса паман, вӑл çав çырусене общественноçран пытарас тесе, вӗсене официальнӑй документсем туса пичетлесе кӑларассине пур майсемпе те чӑрмантарса тӑрать. Журналистсем çакна аса илтереççӗ: 1950 çулхи февральпе апрель хушшинче Генеральнӑй Ассамблея председателӗн Ромуло господинӑн адресӗпе ярса панӑ çавӑн пек çырусене Ассамблея документчӗсем туса пичетлесе кӑларнӑ, çапла вара, Трюгве Ли ку çырусене Генеральнӑй секретарь адресӗпе ярса паман тесе каланипе вӗсене мӗн пирки чарса тӑнин йӑн сӑлтавне никамран та пытарма пултараймасть. Трюгве Ли чӑйӗн ӗçӗпе Грецири палачсене хӳтӗлет.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-89, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑç пайӗ—4-17, ялхуçалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, çырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00542 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ

Паян, мартӑн 11-мӗшӗнче, вырӑсла спектакль „ТРИ СЕСТРЫ"

Ыран, мартӑн 12-мӗшӗнче, чӑвашла спектакль „НАРСПИ"

Спектакльсем каçхине 20 сехетре пуçланаççӗ.

«РОДИНА» КИНОТЕАТРТА

Паян, мартӑн 11-мӗшӗнче, çӗнӗ илемлӗ фильм „Пржевальский"

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççӗ.